Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938
ДЕКАБĔР
22
КĔÇНЕРНИКУН
292 (5105) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать   ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ   Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского. 5. Дом Печати.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0 — 67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—7—97, йалхуçалăх пайĕн — 4—97, советсен пайĕн—0—88, промышлĕннăç пайĕн—0—85, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

Совет демократине çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пымала

Тĕнчери чи демократиллĕ Сталинла Конституци ĕçе кĕнĕренпе виççĕмĕш çул çине кайрĕ. Пирĕн тăван çĕршыври ĕççыннисем Сталинла Конституци тăрăх ĕçлесе тата кĕрешсе социалисăм строительствин пур участкисенче те çĕнĕрен çĕнĕ çĕнтерӳсем туса пыраççĕ. Совет Сойузĕнчи ĕççыннисем большевиксен парти, Сталин йулташ йертсе пынипе, халăхăн усал тăшманĕсене — троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла тискер бандитсене çĕмĕрсе тăкрĕç, вĕсем малала—коммунисăм общĕствипатне хăйулăн пыраççĕ.

ССР Сойузĕн çĕнĕ Конституцийĕ ĕçе кĕнĕренпе пирĕн çĕршывра ССР Сойузĕн, РСФСР тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсем пулса иртрĕç. Совет демократи анлăн та тĕплĕн пурнăçа кĕрсе пынипе Совет Сойузĕнчи халăхсен çĕнĕ сийĕсем рабочисемпе хресчеисен социалисăмлă государствине тытса тăрас ĕçе нихăçанхинчен активлă хутшăнма пуçларĕç.

Сталинла Конституцирен тухса тăракан совет демократисăмне малашне те тĕплĕн пурнăçа кĕртсе пырасси, демократине пăсакансене хирĕç татăклăн кĕрешесси парти тата совет организацийĕсен пысăк задачи пулса тăрать. Совет демократин йĕркисене çирĕп тытса пыни, государствăна тытса тăрас ĕçе ĕççыннисене активлăн хутшăнтарни коммунисăм строительствине ăнăçлăн туса пымали чи кирлĕ условисенчен пĕри пулса тăнине пирĕн йаланах асра тытмала.

Совет органĕсен социалисăмлă демократисăма практикăра пурнăçа кĕртсе пымала. Вĕсен халăха совет демократи йĕркисене пăхăнма, ăна йуратма вĕрентмеле. Совет влаçĕн саккунĕсене йаланах тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пыракан тумала. Пирĕн советсемпе ĕçтăвкомсем совет демократине çирĕп пăхăнса ĕçлени вĕсен халăх умĕнчи авторитетне ӳстерет. Сталинла Конституцине тĕрĕс пурнăçа кĕртсе ĕçлекен райĕçтăвкома, йалсоветне, хула советне халăх йаланах хытă йуратать, чĕререн хисеплет.

Анчах çакна пур çĕрте те асра тытни çук-ха. Республикăре чылай çĕрте совет демократине пăснине кăтартакан фактсем пур. Илĕпĕр райĕçтăвком президиумĕсемпе пленумĕсен ларăвĕсем мĕнле пулса иртнине. Хĕрлĕ Чутай райĕçтăвкомĕ 1938 çулти 10 уйăх хушшинче 42 лару туса иртернĕ пулсан, вĕсенчен 9-шне совет демократи йĕркине пăсса иртернĕ. Райĕçтăвком президиумĕн ларăвĕнче президиум членĕсем 5 çын пулмала, ларусенче час-часах икĕ член —Масленникова тата Павлăва йулташсем çеç пулнă. Кунта демократи йĕрки çинчен манса, ытларах назначени çинчен шутлаççĕ. Райĕçтăвком членне пурĕ 28 йулташа суйланă пулнă, пленум ларăвĕнче час-часах 5—6 член çеç пулаççĕ.

Çавăн пекех, Шăмăршă районĕнче те халăх райĕçтăвком членне суйланă йулташсене ĕçе хутшăнтарасшăн тăрăшмаççĕ. Кунта та райĕçтăвком президиумĕн ларăвĕсем икĕ членпа та пулса иртнисем, президиумăн ытти виçĕ членне ларăва чĕнменнисем сахал мар пулнă. Райĕçтăвком президиумĕн икĕ членĕ хăйсене суйланăранпа та виçĕ хутчен çеç президиум ларăвĕсенче пулнă.

Райĕçтăвкомсем хăйсем Совет демократине çапла пăсаççĕ, халăх суйланă депутатсене ĕçе начар хутшăнтараççĕ пулсан, йалсоветсенче кунашкал çитменлĕхсене тата ытларах курма пулать. Карăклă (Канаш районĕ), Çĕмĕрле, Йегоркинă (Çĕмĕрле районĕ) тата ытти районсенчи уйрăм йалсовечĕсем совет демократин йĕркисене пысăккăн пăсаççĕ. Йалсоветсенче совет демократине пăсни чи малтан халăх суйланă членсене йалсовечĕн кулленхи ĕçне хутшăнтарманнипе, пленумсемпе президиумсен ларăвĕсене членсен сахал хисепĕпе иртернипе пулса пырать. Райĕçтăвкомсем йалсоветсене совет демократине пăхăнма вĕрентес, демократине пăснă тĕслĕхсене çийĕнчех тӳрлетес вырăнне, хăйсем те çак йалсоветсенчи пекпăсăксенчен хăтăлман.

Совет демократине пăсни мĕн патне илсе пынине Трак райĕçтăвкомĕн пĕр постановленийĕ лайăх кăтартса парать. Райĕçтăвком тасалăхшăн кĕрешме, тифчирне пĕтерсе хурассишĕн кĕрешме шут тытнă. Анчах вăл ку ĕçе хăйне майлă, урăхла „саккун" шухăшласа кăларнипе тума палартнă. Райĕçтăвком Совет влаçĕн саккунĕсенчен иртсе кайса: „Трак районĕнче пурăнакан кашни гражданинăн обязаннăçĕ кашни 10 кунта пĕрре мунча кĕрсе, кĕпе-йĕм çинче пыйтă пулсан, районти сывлăх пайĕн дезокамĕрĕ витĕр кăларасси пулать. Çак постановленине пурнăçа кĕртменнисене 100 тенкĕ штраф тумала", тесе постановлени йышăннă. Акă ĕнтĕ Хусаншăн пĕр саккун, Калугăшăн тепĕр саккун шухăшласа кăларакансем. Çитменне райĕçтăвком çак йăнăш та сиенлĕ постановленине халĕ те пăрахăç туман-ха.

Совет демократин принципĕ таса, ăна пăсма никама та ирĕк паман. Совет демократине çирĕп тытса пырасси, ун çинчен халăха тĕплĕн ăнлантарса парасси, ĕççыннисене советсен ĕçне активлăн хутшăнтарасси, çекцисен, депутат групписен ĕçне лайăхлатасси—райĕçтăвкомсемпе йалсоветсен куллен кун, чĕререн йуратса туса пымали ĕçĕ пулса тăрать. Анчах райĕçтăвкомсемпе йалсоветсем чылайĕшĕ халĕ те-ха Сталинла Конституцине ĕçе кĕртнĕ май хăйсен ĕçне вĕçне çити демократизацилемеççĕ. Вĕсем массăна çыхăну тытассине кăштах вăйсăрлатни те, халăх суйланă депутатсене ĕçе хутшăнтарманни, депутат правине пĕчĕклетни, совет демократине пăсни пирĕн кадрсене чиновниклентересси, бюрократлантарасси патне илсе пынине ăнланса илмеççĕ.

Совет демократине пăснине хирĕç кĕрешесси парторганизацисен ĕçĕ те пулса тăрать. Анчах кутĕлĕшпе парторганизацисем сахал ĕçлеççĕ-ха. Совет демократине пăснă фактсенчен нимĕнле вывăд тумасăр, демократине пăснине пĕтермесĕр иртсе кайма йурамасть.

Сталинла Конституци совет демократине çирĕп тытса пыма, советсен ĕçне ĕççыннисен массине активлăн хутшăнтарма хушать. Совет демократине çирĕп тытса пырса, советсен пĕтĕм ĕçне лайăхлатса йамала.

В. П. Чкалăв килйышĕпе тăванĕсем Сталин йулташ патне йанă çыру

Валерий Павлăвич Чкалăв килйышĕпе тăванĕсем Сире, хаклă Иосиф Виссарионăвич, çак йăвăр, хуйхăлă кунсенче Есĕр пирĕн çине питĕ ăшшăн тăрăшса пăхнăшăн чĕререн, тарăнăн тав тăваççĕ.

Есĕр пур чухне те йаланах Валерий Павлăвич çине ашшĕ пек сисĕмлĕн пăхнине епĕр уйрăмăнах кăмăллăн аса илетпĕр.

Вăл Сирĕнпе калаçнисем, вăл Сирĕнтен илнĕ кăтартусем ун ăшĕнче мăн кăмăллăхпа шанчăклăх туйăмне çуратнă: ăна паттăр пулма, социалисăмлă тăван çĕршыв чăпĕшĕн пĕрмайах çĕнĕ çĕнтерӳсем тăвассишĕн тăрăшма вĕрентнĕ.

Çак туйăмсемпе, çак шухăшсемпе Валерий пире те, унпа çывăх çынсене, хавхалантарнă.

Есĕр, Иосиф Виссарионăвич, ăста пахчаç пек çав тери ăшшăн пăхса чăтăмлă ывăла, Тăван çĕршыв ĕçĕшĕн тăракан, социалисăм ĕçĕшĕн хăйĕн пĕтĕм пурнăçне нимĕн йулмиччен панă Валерий Павлăвич Чкалăв большевика çитĕнтерме пĕлнине асра тытни кĕтмен çĕртен килсе тухнă пысăк хуйăхра пире пысăк лăплану кӳрĕ.

Епĕр асран кайми упăшкан, аттен, ывăлăн, пиччепе шăллăмăрăн çутă сăнне хамăрăн чĕресенче тытăпăр. Сире, тăван, йуратнă Иосиф Виссарионăвич, Валерий Павлăвич Чкалăв килйышĕн членĕсемпе тăванĕсен чыслă йатне çӳлте тытас тесе, тӳрĕ кăмăлпа тата паттăрăн ĕçлесе пыма шантарса сăмах паратпăр.

Ольга Чкалăвă
Игорь Чкалăв
Алексей тата Зинаидă Чкалăвсем
Натали Чкалăвă
Йăмăкĕсем: Софипе Анна Чкалăвăсем
Владимир тата Иурий Фролищевсем
Никифор тата Константин Гордейĕвсем
Марийа Орехăвă
Георгий Орехăв
Йевгенийа Орехăвă.

Ĕçлев кĕнекисем памала тăвасси çинчен

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

Предприйатисемпе учреждениссенче ĕçлекен рабочисемпе служăщчисен учотне йĕркене кĕртме, ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăнать:

1. 1939 çулти йанварĕн 15-мĕшĕчен мĕнпур государствă тата кооперации предприйатийĕсемпе учреждениссенче ĕçлекен рабочисемпе служăщчисене Ĕçлев кĕнекисем памала тăвас, вăл кĕнекесене предприйати (учреждени) администрацийĕ парать.

2. Ĕçлев кĕнекисем çине Ĕçлев кĕнекине тытакан çын çинчен çакăн пек сведенисем кĕртмеле: хушамачĕ, йачĕ тата ашшĕ йачĕ, миçе çулти, вĕренни, професси тата унăн ĕçĕ çинчен, вăл пĕр предприйатирен (учреждениren) тепĕр çĕре куçни çинчен, мĕнле сăлтавпа куçни çинчен, çавăн пекех ăна хавхалантарнине тата вăл наградăсем илнине кăтартакан сведенисем.

3. Ĕçлев кĕнекин формине çирĕплетес.

4. Ĕçлев кĕнекисене пĕтĕм Совет Сойузĕшĕн пĕр образец тăрăх хатĕрлеççĕ. Ĕçлев кĕнеки текстне вырăсла тата çав сойузлă йе автономлă республикă чĕлхипе пичетлеççĕ.

5. Ĕçлев кĕнеки çине çак предприйатире (учреждениre) ĕçе мĕнле чĕлхепе тăваççĕ, çав чĕлхепе çыраççĕ. Ĕçе сойузлă йе автономлă республикă чĕлхипе тăваççĕ пулсан, Ĕçлев кĕнеки çине вăрă пĕр вăхăтрах вырăсла та çыраççĕ.

6. Ĕçе кĕрекен рабочисемпе служăщчисен предприйати (учреждени) администрацине Ĕçлев кĕнекине кăтартмала. Администраци рабочисемпе служăщчисене ĕçе Ĕçлев кĕнекине кăтартнă хыççăн çеç илме пултарать.

Ĕçе пуçласа кĕрекен çынсен администрацине хăйсен йулашки ĕçĕ çинчен кăтартса домоуправлени йе йалсовечĕ панă справкăна кăтартмала.

7. Предприйатисемпе учреждени администрацийĕн рабочисемпе служăщчисене Ĕçлев кĕнекисене 1939 çулти йанварĕн 15-мĕшчен парса пĕтермеле.

Çакăн хыççăн ĕçе пуçласа кĕрекен çынсене Ĕçлев кĕнекисене çын ĕçе кĕнĕ хыççăн 5 кунран кайа йулмасăр памала.

8. Ĕçлев кĕнекисем предприйатисенче (учреждениссенче) 5 кунран ытла ĕçлекен пур рабочисемпе служăщчисемшĕн те пулаççĕ, вăл шутра сезонлăх тата вăхăтлăх ĕçлекен работниксемшĕн те.

Совместительствă тăрăх ĕçлекен çынсемшĕн Ĕçлев кĕнекине тĕп ĕç тăрăх çеç çырса параççĕ.

9. Ĕçлев кĕнеки предприйати (учреждени) администрацийĕ патĕнче усранать, рабочие йе служăщчие ĕçрен кăларса йанă чухне кĕнекене алла параççĕ.

10. Ĕçлев кĕнекисене предприйатисемпе учреждени администрацийĕсем, çак правилăсене пăхăнса тултараççĕ:

а) Хăçан çуралнине, вăтам тата аслă шкултан вĕренсе тухнине документсем тăрăх çеç кăтартаççĕ. Пуçламĕш шкултан вĕренсе тухни çинчен рабочи йе служăщчи хăй каласа пани тăрăх çырма йурать.

б) „Профессия" текен графăра рабочи йе служăщчи каланă тăрах тĕп профессине кăтартмала.

в) „Сведения о работе" текен пайра чăн малтан, 3-мĕш графăра çаксене çыраççĕ: „Ĕçлев кĕнекине паракан предприйатипе (учреждение) кĕриччен тара кĕрĕшсе ĕçленин пĕтĕмĕш стажĕ çавăн чухлĕ çул". 4-мĕш графăра, çавна майăн, „документсемпе çирĕплетнĕ стаж çавăн чухлĕ çул, хăй каланипе çырнă стаж çавăн чухлĕ çул" тесе çыраççĕ.

г) Малала, заголовкă пек, Ĕçлев кĕнеки паракан предприйати (учреждени) йатне çыраççĕ.

Çак заголовкă айне çак предприйатине (учреждение) ĕçе илнĕ вăхăт çинчен тата Ĕçлев кĕнекине çыриччен пĕр ĕçрен тепĕр ĕçе куçарнисем çинчен çыраççĕ.

«Сведения о работе» текен пайра çырмалисене çакăн пек йĕркелеççĕ: 2-мĕш графăра ĕçе илнĕ, пĕр ĕçрен тепĕр ĕçе куçарнă йе ĕçрен кăларнă датăна кăтартаççĕ; 3-мĕш графăра: «çав цеха (пайа) çав ĕçе илнĕ», йе «çав ĕçе илнĕ», йе «çав цеха (пайа) çав ĕçе куçарнă», йе «ĕçрен çав сăлтава пула кăларнă» тесе çыраççĕ; ĕçрен кăларнă сăлтава ĕçлев çинчен кăларнă саккунсен Кодексне тĕрĕс çураçулăн кăтартмала йе çав Кодексăн статйин (пункчĕ) çине кăтартса памала; 4-мĕш графăра ĕçе илни, пĕр ĕçрен тепĕр ĕçе куçарни, йе ĕçрен кăларни çинчен панă приказа йе распорйаженине кăтартмала.

Ĕçлев кĕнекине панă хыççăн малала çырмалисене пурне те приказ йе распорйажени кăларнă хыççăн çийĕнчех çырмала.

Малала ытти вырăнсенче ĕçленисем çинчен те çакăн пекех çырса пыраççĕ.

Взыскани хуни çинчен Ĕçлев кĕнеки çине çырмаççĕ.

д) Хавхалантарнисем, наградăланисем çинчен Ĕçлев кĕнеки паракан предприйатине (учреждение) ĕçе кĕнĕ кунран пуçласа çыраççĕ. Кунта предприйатири (учреждениri) ĕçпе çыхăнса тăракан пĕрвăхатлăх, индивидуальнăй хавхалантарусемпе наградăланисене çеç çыраççĕ. Ĕçукçи çистеми тăрăх пулмали премисене çырмаççĕ.

е) Ĕçрен кăларнă чухне: ĕçлени çинчен, вăл предприйатире (учреждениre) ĕçленĕ вăхăтра хавхалантару, наградăсем илни çинчен çырса пынисене предприйати (учреждени) руководителĕ (йе вăл йатарласа уполномочи панă çын) алă пусса тата пичет пусса çирĕплетет.

ж) Ĕçлев кĕнекисем çине çырмалисене пурне те чернилпа çыраççĕ.

11. Ĕçлев кĕнеки панăшăн предприйати (учреждени) администрацийĕ кĕнеке тытакансран 50 пус тӳлев илет.

12. Ĕçлев кĕнекине тĕплĕ пăхмасăр пирки çухатас пулсан, предприйати (учреждени) администрацийĕ Ĕçлев кĕнеки тытакан çине администратиллă йĕркепе 25 тенкĕ чухлĕ штраф хурать.

Ĕçлев кĕнекине çухатсан, кун çинчен çийĕнчех администрацине пĕлтермеле (хăй йулашки вăхăтра ĕçленĕ вырăна). Зайавлени панă хыççăн администраци 15 кунран мала йамасăр çĕнĕ Ĕçлев кĕнеки парать, ун çине: „Дубликат" тесе çырать.

13. Ĕçлев кĕнеки панăшăн илекен тӳллев укçи те, Ĕçлев кĕнекине çухатнă пирки илекен штраф укçи те государствă доходне кĕрет.

14. Ĕçлев кĕнекисемпе саккунхушман пек усă курнăшăн, вĕсене урăх çынсене панăшăн, подделкă тунăшăн, хуратса тӳрлетнĕшĕн уголовнăй йĕркепе айăплаççĕ.

15. Ĕçлев кĕнекисене предприйатисемпе учреждениссем тивĕçлĕ халăх комиссариачĕсемпе учреждениссенчен илеççĕ.

16. ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1926 çулти çентабĕрĕн 21-мĕшĕнче „Ĕçлев спискисем çинчен" кăларнă постановлени (Собрание Законов СССР 1926 года №—66, ст. 502; 1929 года №—35, ст. 315) пăрахăçа тухать.

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ **В. МОЛĂТАВ.**

ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕçĕсене туса пыраканĕ **И. БОЛЬШАКОВ.**

Мускав, Кремль.
1938 ç. декабĕрĕн 20-мĕш.

Допризывниксен канашлăвĕ

УЛАТĂР. Декабĕрĕн 19-мĕшĕнче, чукунçул клубĕнче, 1918—19 çулсенче çуралнă допризывниксен канашлăвĕ пулчĕ. Канашлура ПСК(б)П Чăваш Обкомĕнчен пынă представитель тĕнчери лару-тăру çинчен тата Хасан кӳлли районĕнчи çапăçусенче пулнă красноармеец Макарăв йулташ Йапони самурайĕсене çĕмĕрсе тăкни çинчен каласа пачĕç.

Йулашкинчен чылай допризывниксем тухса каларĕç. Призыва кĕриччен допризывниксем çар ĕçне отличнă вĕренсе, кашни допризывник виççĕрен кайа мар оборонă значокĕсем илме пулчĕç. Хăйсем пекех çар ĕçне отличнă вĕренме Канаш районĕнчи допризывниксене социалисăмлă ăмăртăва чĕнчĕç.

С. Федотăв.

Писатель-орденоносец Н. А. Островский. Вăл 1936 çулти декабĕрĕн 22-мĕшĕнче вилнĕ.

Совет Сойуз Геройĕн Винокурăв йулташăн саламĕ

Сталинла Конституци хĕвелĕн ăшшипе ӳссе чечекленекен Чăваш республикĕнчи ĕççыннисене, хамăн земляксене, хĕрӳлĕ салам йаратăп.

Совет Сойуз Геройĕ аслă лейтенант **В.П. Винокурăв.**

Совет Сойуз Геройĕ В.П. Винокурăв йулташ Шупашкарта

Ĕнер, декабĕрĕн 21-мĕшĕнче, ирхине, Хасан кӳлли районĕнчи отпорлă паттăр çапăçусен участникĕ, Совет Сойуз Геройĕ аслă лейтенант В.П. Винокурăв йулташ Шупашкара çитрĕ.

Канаш хулинче В.П. Винокурăв йулташа парти Чăваш Обкомĕн, Халăх Комиссарĕсен Совечĕн, комсомол Обкомĕн, парти Канаш райкомĕн тата пичет представителĕсем кĕтсе илнĕ.

Винокурăв йулташ Шупашкарта темиçе кун хушши пурăнать. Вăл çав вăхăтра хăй ĕçленĕ авторемонтнăй савăтра пулать, хулари комсомолецсемпе, пионерсемпе тата студентсемпе тĕл пулса калаçать.

Ĕнер кăнтăрла Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕнче Винокурăв йулташа йышăну пулчĕ. Йышăнура ПСК(б)П Обкомĕн бюро членĕсемпе тата правительствă членĕсемпе Винокурăв йулташ хушшинче туслă калаçу пулса иртрĕ. Совет Сойуз Геройĕ Винокурăв йулташ Хасан кӳлли районĕнчи çапăçусем çинчен каласа пачĕ.

ССР Сойузĕн орденĕсене пани

Декабĕрĕн 17-мĕшĕнче ССРС Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕн заместителĕ Г. И Петровский йулташ наградăланă йулташсене орденсем панă.

Хасан кӳлли районне сыхланă чухне çапăçу заданийĕсене кăтартулăн пурнăçланăшăн тата геройлăх кăтартнăшăн майор М. С. Бочкарйов йулташа тата аслă лейтенант В. П. Винокурăв йулташа, çавăн пекех тата Совет Сойузĕн оборонă хăватне тĕреклетес тĕлĕшпе правительствă йатарласах панă заданисене кăтартулăн пурнăçланăшăн тата геройлăх кăтартнăшăн 2-мĕш рангри капитана И. А. Бурмистрăв йулташа Совет Сойуз Геройĕ йатне пани çинчен грамотăсем тата Ленин орденĕсем панă.

Совет Сойуз Геройĕ Винокурăв йулташ хĕрӳлĕ сăмах тухса каланă.

Ленинградри артиллери-техникă училищă представителĕсем орденсем илнĕ. Курсант Горбунов училищăн бойевой ĕçĕсем çинчен калать тата училищăн паха традицийĕсем чыслăн сыхланса пурăнĕç, училищă малашне те пысăк квалификациллĕ, пур тĕрлĕ арттилерине те чаплăн вĕренсе алла илнĕ командир-большевиксем хатĕрлесе пырĕ, тесе шантарса калать.

Çавăн пекех Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн командлă составĕн квалификацине ӳстермелли Артиллери курсĕн представителĕсене те Хĕрлĕ Йалав орденĕ панă, ăна унăн иртнĕ вăхăтри бойевой ĕçĕсене паллă тăвас шутпа, вăл Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн артиллери кадрĕсене хатĕрлес ĕçре паллă та пысăк тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн наградăланă.

Унтан Хасан кӳлли районĕсенчи çапăçусенче пулнă мухтавлă паттăрсене—батальон комиссарĕ Йелисейĕв йулташа, аслă политрук Никанорăв йулташа, кĕçĕн командир Шлыхăв йулташа, лейтенант Душкин йулташа, красноармеец Захарăв йулташа тата ыттисене те орденсем панă. Çавăн пекех тата Хĕрлĕ Çарăн соединенийĕсене, чаçĕсене тата подразделенийĕсене çар ĕçне вĕрентес, политикă тата техникă тĕлĕшĕнчен хатĕрлес ĕçре пысăк та чаплă çитĕнӳсем тунăшăн наградăланă йулташсен группи орденсем илнĕ.

Унтан орденсем илеççĕ: лейтенант Степанăв йулташ, ăна паттăрлăх тата веçсĕр ĕçĕнче калама çук чаплă маçтарлăх палăртнăшăн наградăланă, аслă лейтенант Наумăв йулташ тата Миронăв йулташ вĕсене „Родина" самолета шыранă чух тата ăна илсе тухнă чух хăйсен пурнăçне шеллемесĕр ăнăçлă ĕçсем туса иртернĕшĕн наградăланă тата ыт. те.

Г. И. Петровский вĕсене пысăк та чаплă наградă илнĕ май саламланă, сывлăхла пулма, çĕнĕ çитĕнӳçем тума ыра суннă.

Епĕр пурăнакан вăхăтри аслă летчике, пĕтĕм çĕршыв йуратнă Валерий Павлăвич Чкалăва асăнса, орденоносецсем ăна ура çине тăрса чысланă.

(ТАСС).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Комсомолăн Шупашкар хулинчи актив пухăвĕ йышăннă

РЕЗОЛЮЦИ

Волковă йулташ ПСÇЛКС Тĕпкомĕн VII-мĕш пленум ĕçĕсем çинчен тунă доклада итлесе сÿтсе йавнă хыççăн, комсомолăн Шупашкар хулинчи активĕ ПСÇЛКС Тĕпкомĕн, комсомол руководствинчен политикăлла тĕлĕшпе панкрута тухнă, пăсăлса кайнă çынсене хăваласа кăларнă тата ПСÇЛКС Тĕпкомĕн большевикла çĕнĕ руководстви суйланă VII-мĕш пленум решенисене пĕтĕмпех ырласа йышăнать.

ПСÇЛКС Тĕпкомĕн ПСК(б)П Тĕпкомĕпе тата Сталин йулташ [illegible] Тĕпкомĕн большевикла мар, çĕрĕк руководствине уçса панăртăр. Косарĕвпа Вершков ПСК(б)П Тĕпкомне улталанă, комсомола улталанă. Икĕпитленсе, хăйсене хăйсем ПСÇЛКС Тĕпкомĕн IV-мĕш пленумĕн решенисем майлă пулнă пек кăтартса, ĕçре вĕсем ĕçкĕ-çикĕпе пăсăлнă çынсене пытарса тăнă, двурушниксемпе тăшмансене сыхланă, Чăваш республикĕнчи партипе комсомол руководствине кĕрсе кайнă пулнă тăшмансене активлăн тăрă шыв çине кăларнă Мишакова йулташа, комсомолăн çак лайăх работникне, пĕтерсе лартма тăрăшнă. Косарĕвпа унăн майлисем икĕ питленсе, улталаса активăн йертсе пыракан кадрĕсене идейăллă тĕлĕшпе пăсма, Ленинла комсомола парти руководствинчен уйăрса йама тăрăшнă. Вĕсем комсомолĕцсен сыхăлăхне йăвашлатасшăн пулнă, çапла вара комсомол билечĕпе витĕнсе тăракан тăшмансене хăйсен киревсĕр ĕçĕсене тума май парасшăн пулнă. Чăваш организацийĕнчи комсомол активĕ тарăхса çакна пĕлсе тăвать: ПСÇЛКС Тĕпкомĕн кивĕ руководстви — Косарĕв, Вершков — ПСÇЛКС Чăваш организаци XIV-мĕш конференци решенисене саккунсăр хирĕç пырса пăрахăçа кăларнă, вăл решенисем, Мишакова йулташ пулăшнипе, халăх тăшманĕсене — Сымокина, Терентйева т. ыт. те тăрă шыв çине кăларнă. Анчах ПСÇЛКС Тĕпкомĕн кивĕ руководстви вĕсене тÿрре кăларнă.

Актив пухăвĕ ПСÇЛКС Тĕпкомĕн VII-мĕш пленумĕн решенийĕсем комсомолăн Чăваш организацийĕшĕн уйрăмăнах пысăк вырăнта тăраççĕ, тесе шутлать, мĕншĕн тесен, вĕсем ПСÇЛКС Тĕпком руководствинче пулнă халăх тăшманĕсене пытарса тăнă тăшмансене, комсомолăн Чăваш организацинче хăйсен киревсĕр ĕçĕсене туса пурăннă тăшмансене татăклăнах çĕмĕрсе такрĕç. ПСÇЛКС Тĕпкомĕн VII-мĕш пленумĕн решенийĕсем Чăваш организацийĕнчи пĕтĕм комсомолĕцсене хăйсен ретĕсенчен халăх тăшманĕсене—троцкисла-бухаринла, буржуалă-националисла ушкăнсемпе кайашсене татăклăнах тасатассишĕн кĕрешме хĕçпăшаллантараççĕ.

Актив пухăвĕ ПСÇЛКС Тĕпкомĕн VII-мĕш пленумĕн решенийĕсем çинчен сÿтсе йавнă хыççăн çапла шутлать: ПСÇЛКС Тĕпкомĕн VII-мĕш пленумĕ ПСÇЛКС Тĕпком руководствинче пулнă партине хирĕçлĕ, çĕрĕк практикă ПСÇЛКС Чăваш Обкомĕпе Шупашкар хула комитет ĕçĕсенче те пулнă.

ПСÇЛКС Тĕпкомĕпе хула комитет бÿровĕсем халăх тăшманĕсене, двурушниксене тăрă шыв çине кăларассищĕн, облăçри организацире сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерессищĕн кĕрешмен.

[illegible] ПСÇЛКС Тĕпкомĕн IV-мĕш пленумĕпе ПСÇЛКС Чăваш организацийĕн XIV-мĕш конференци решенийĕсене хирĕç пынă.

ПСÇЛКС Обком секретарĕ пулнă Никифоров, политикă тĕлĕшĕнчен панкрута тухнăскер, йăла тĕлĕшĕнчен пăсăлса кайнăскер, пур майсемпе те Мишакова йулташ çинчен елек сарма, комсомолăн облăçри XIV-мĕш конференци решенийĕсене пăрахăçа кăларма тăрăшнă, çапла вара халăх тăшманĕсемпе вĕсен йулашкисене хирĕç кĕрешес ĕçре комсомолăн Чăваш организацине демобилизациленĕ. Халăх тăшманĕсене — Сымокина, Терентйева хÿтĕлес, вĕсене тÿрремĕнех пулăшас, тÿрĕ комсомолĕцсене нимĕнле сăлтавсăр комсомолран кăларас çул çине тăнă.

ПСÇЛКС хула комитечĕпе обком бÿровĕсем, чи малтан вĕсен секретарĕсем — Моисейева, Арзамасцев, Баранов—çамрăксене идейăллă тĕлĕшĕнчен воспитани парас йĕвне пе ĕçлемен, комсомол организацисенче большевикла пропаганда ĕçне хăй йĕххине йанă, йăла тĕлĕшĕнчен пăсăлнисене хирĕç кĕрешмен (Пединститутри ПСÇЛКС комитет членĕсем вĕренекен çамрăксем хушшинче ĕçкĕ сарни, комсомол ĕçне пухăнтарса йани, правовой шкулта ушкăнпа ĕçкĕсем туни, обком секретарĕ пулнă Никифоров хĕрачасем çине йыхăла пакни).

Обкомпа хула комитет бÿровĕсен практикинче коллективлă руководствă принципĕсене йĕркесĕр пăсăнисем пулнă. Обкомпа хула комитет бÿровĕсен ларăвĕсем бÿро членĕсем икĕ-виç çын пулнипе пулса иртнисем те пулнă, бÿро ларăвĕсенче критикăпа самокритикă, Обкомпа хула комитечĕн уйрăм работникĕсен йăнăшĕсемпе çитменлĕхĕсене критиклени пулман. Обкомпа хула комитечĕ комсомолăн пуçламĕш организацисенчен, малта тăракан совет çамрăкĕсенчен уйрăлса кайнă. Кадрсене парти хушнă пек ĕçри пултарулăхĕ, политикăлла пахалăхĕ тăрăх мар, паллакă тăрăх, личнăй çыхăнусем тăрăх суйласа илнĕ. Шупашкар хула комитечĕн пĕрремĕш секретарĕнче ĕçлеме Моисейевăна çав принцип тăрăх лартнă пулнă.

Актив пухăвĕ: ПСÇЛКС Обкомĕпе хула комитет бÿровĕсем ПСК(б)П Обкомĕ комсомолĕцсене Канаш — Шупашкар чукуççул строительствинче ĕçлеме кăларма хушнă боевой заданине пурнăçламан, тесе шутлать.

Актив пухăвĕ: ПСК(б)П Обкомĕ тата ПСÇЛКС Обкомĕ Никифорова ПСÇЛКС обкомĕн пĕрремĕш секретарĕнчен, партирен тата комсомолран кăлармалла туса йышăннă решенисене, çавăн пекех тата ПСÇЛКС хула комитет бÿровĕ Моисейевăна ПСÇЛКС хула комитет составĕнчен кăлармалла туса йышăннă решенисене ырлать.

[illegible] „Красная Чувашия", „Чăваш Коммунĕ" тата „Çамрăк большевик" хаçатсем ПСК(б)П Обкомĕн кивĕ, тăшманла руководстви хыççăн пынă, хăйсен страницисенче Сымокина, Терентйева тата ытти тăшмансене те тÿрре кăларнă тата Мишакова йулташ çинчен пĕр сăлтавсăр елекленĕ, çавăнпа вĕсем комсомолăн Чăваш организацине пĕр вăхăтра деморализациленĕ.

Пуху „Красная Чувашия" хаçатăн парти пурнăç пайĕн пуçлăхĕ пулнă Сарра йулташ хăйне мĕнле тыткаланине сивлет. Вăл ПСК(б)П Обкомĕнче йертсе пырас ĕçре ларнă халăх тăшманĕсем умĕнче килĕшсе, хаçат страницисем çинче халăх тăшманĕсене Сымокина тата Терентйева тÿрре кăларнă, партин шанчăклă хĕрне Мишакова йулташа елеклекен материалсем çырнă. Хăйĕн политикăлла йăнăшĕсем çинчен актив умĕнче большевикла тухса калас вырăнне, Сарра йулташ хăйĕн двурушникле сăмахĕпе пĕтĕм айăпа ПСÇЛКС обкомĕ çине сирсе йарса ответлăхран пăрăнма хăтланчĕ.

Шупашкар хулинчи комсомол активĕн пухăвĕ ПСÇЛКС Обкомне тата хула комитетне çамрăксене идейăллă воспитани парас ĕçе татăклăнах лайăхлатма, комсомола тăшманла елементсенчен тасатма тата йертсе пырас ĕçе комсомол работникĕсен çĕнĕ кадрĕсене лартма сĕнет.

Актив пухăвĕ Обкомпа хула комитетне превире тухса каланă йулташсен сăмахĕсенчен тухса тăракан ыйтусене, уйрăм çынсене тивекеннисене те тата ыттисене те пăхса тухма сĕнет.

Актив пухăвĕ ПСÇЛКС Обкомне, хула комитетне тата комсомолăн пуçламĕш организацийĕсене комсомолĕцсемпе союзра тăман çамрăксем хушшинче ПСÇЛКС Тĕпкомĕн VII-мĕш пленумĕн решенийĕсене анлăн ăнлантарса пама сĕнет.

ПСÇЛКС Тĕпкомĕн IV-мĕш тата VII-мĕш пленумĕсем йышăннă решенисене пурнăçлас ĕçе пуçарса йамала.

Актив республикăри пур комсомолĕцсене те районсенчи тата хулари конференцисене идейăллă-политикăлла пысăк çÿллĕшре иртерме, хăйсене-хăйсем [illegible] вĕсен кам иккенне пăхса тăмасăр йăлăн критиклеме чĕнет.

Йертсе пырас ĕçе чи лайăх комсомолĕцсене, пирĕн тăван çĕршыва тата партине вĕçне çитиех парăннă, тăшмансемпе вĕсен кайăшĕсене хирĕç большевикла кĕрешме пултаракан çынсене суйламала.

Актив пухăвĕ ПСÇЛКС Обкомне тата хула комитетне „ПСК(б)П историн Кĕске курсне" кăларнă май парти пропагандине йĕркелесси çинчен" ПСК(б)П Тĕпкомĕ йышăннă решенине пур комсомолĕцсене те, пур çамрăксене те ăнлантарса пама, комсомолĕцсемпе çамрăксене марксисăм-ленинисăма вĕренес ĕçре пулăшма сĕнет. Актив пухăвĕ комсомолĕцсене парти Тĕпкомĕн саламĕнче тата Жданов йулташăн ПСÇЛКС Тĕпкомĕн йубилейлă пленумĕнче каланă докладра кăтартса панă йăнăшсене тимлĕн, вăйа хурса тÿрлетме чĕнет.

Комсомолăн Чăваш организацийĕ, пĕтĕм Ленинла комсомол пекех, хăйĕн ĕçĕнчи йăнăшсемпе çитменлĕхсене вĕçне çитиех тÿрлетĕ, çамрăксене коммунисла воспитани парас ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тăвĕ.

Комсомолăн Чăваш организацийĕ йаланах Ленинăн—Сталинăн аслă партин шанчăклă помощникĕ пулнă, социализмлă тăван çĕршыва, большевиксен партине, аслă çулпуçĕ тата учителе Сталин йулташа вĕçне çитиех парăннă тата малашне те вăл çапла пулĕ.

Сывă пултăр Ленинăн—Сталинăн Аслă партийĕ!

Сывă пултăр аслă çулпуçĕ, совет çамрăкĕсен тусĕ тата учителĕ Сталин йулташ!

Колхозри организаци

Утаркассинчи (Хĕрлĕ Чутай р.) „Пятилетка" колхоз çумĕнче 1938 çулта 3 çынран комсомол организаци турĕç. Комсомолĕсен йышĕ нумай мар пулнă пулсан та, вĕсем çамрăксене хăйсен таврашне йавăçтарас тĕлĕшпе питĕ тăрăшса ĕçлерĕç. Çамрăксем хушшинче массăллă-политикăлла ĕçе йĕркелерĕç, драмкружок организацилесе унта çамрăксене нумай хутшăнтарчĕç. Драмкружок колхозниксене 9 спектакль лартса пачĕ. Спектакль умĕн йăланах политикăлла ыйтусем тăрăх докладсем туса иртереççĕ.

Комсомолĕсем ССРС Верховнăй Совечĕн II-мĕш Сессийĕ йышăннă саккунсене ăнлантарса парас тĕлĕшпе те активлă ĕçлерĕç. Çакăн хыççăн 33 йединоличчик колхоза кĕчĕç.

Çак кĕске вăхăтрах комсомолĕцсен йышĕ те чылай ÿсрĕ.

П. Çидăрăв.

Коммуниссен сĕнĕвĕсене çине тăрса пурнăçламала

Лаш Тайапари (Йĕлчĕк р.) пуçламĕш парторганизацинче отчотпа суйлав пухăвĕ майан 4-мĕшĕнче пулса иртнĕ. Çак пухура коммуниссем пуçламĕш парторганизацин ĕçĕнчи çитменлĕхсене большевикла критикленĕ.

Иртнĕ çулсенче кунта парти документĕсене йĕркелĕ сыхласа усрани пулман. Парторг Романов йулташ парти документĕсене, пуху протоколĕсене хăйпе пĕрле илсе çÿренĕ, протоколсене парти райкомне вăхăтра тăратман. Парти членĕн кандидачĕ С. Смирнов ĕçке йерсе кайса, парти членĕн кандидат карточкисене [illegible] тăван парте тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлемен. Парти ретне ÿстерес йĕнĕпе те пуçламĕш парторганизаци партире тăман актив, колхозри стахановецсем хушшинче политикăлла воспитани ĕçне кирлĕ пек йĕркелемен. Çавăн пекех йышăннă решенисем пурнăçа кĕнине те парторг Романов йулташ куллен тĕрĕслесе пыман. Пухура коммуниссем çак çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе хаклă сĕнÿсем парса хăварнă.

Отчотпа суйлав пухăвĕ пулнăран вара вăхăт нумай иртрĕ. Çак вăхăтра парторганизаци коммуниссем парса хăварнă сĕнÿсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса иртернĕ. Чи малтан парти документĕсене пăхса усрассине йĕркеленĕ, коммуниссен пухăвĕсем йĕркелĕ иртеççĕ. Парти ретне кăçал икĕ йулташа, сочувствуйушчисен ретне икĕ йулташа илнĕ. Колхозри активиссем, стахановецсем парти ретне кĕме хатĕрленеççĕ. Колхозниксем хушшинчи политикăлла агитаци ĕçĕ лайăхланчĕ. Халĕ колхозниксене Молотов йулташ докладне, ПСК(б)П Обкомĕн II-мĕш пленумĕн решенисене, 1939 çулхи халăх переписĕ çинчен ăнлантарса параççĕ.

„ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсĕ" тухни коммуниссен большевисăма вĕренсе алла илес активлăхне нихçанхинчен çÿле çĕклерĕ. ЧАССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ, Вăрăм Хава йалсовет председателĕ, парти членĕ Смирнова йулташ парти историне хар[illegible] Романов тата ытти йулташсем те парти историне тăрăшса вĕренеççĕ.

Отчотпа суйлав пухăвĕ йышăннă решенисене пурнăçа кĕртес йĕнĕпе парторганизаци чылай ĕçсем тунă пулин те, унăн ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур. Парти членĕн кандидачĕ Смирнов халĕ те парти дисциплинине пăсма чарăнмаст. Коммуниссен пухăвĕсене йĕркелĕ çÿремест. Парторганизаци Смирнова йĕркене кĕртес тĕлĕшпе кирлĕ таран ĕçлемест. Çавăн пекех, парторганизаци комсомолĕцсен политикăлла воспитани ĕçне йĕркелемен. Çакна пула комсомолĕцсем хушшинче йăла тĕлĕшĕнчен пăсăлнисем пур. Тата йалсоветĕнче хуçалăх ĕçĕсем кайа йулса пыраççĕ. Парторганизаци ку тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлет-ха.

Н. А. Андрейĕв

ПСК(б)П Йĕлчĕк райкомĕн пропагандисĕ.

Буржуалă националиссен кайашне парти ретĕнчен кăларса ывăтмала

Судаков вăл чейе, хăйĕн чăн-чăн сăн-сăпатне партирен, халăхран пытарма мăстăр пĕлекен çын. Çавăнпа та вăл нумай çул хушши хăй буржуалă националиссен „краеведени обшчĕстви" текен контрреволюцилĕ организацинче тăнине, вăл контрреволюцилĕ организацин çекретарĕ пулнине партирен пытарса пурăнма пултарнă.

Буржуалă националиссене, шпионсемпе диверсантсене, сăтăрçăсене тăрă шыв çине кăларсан, Судаков йаланах вĕсене ыхланам пекки тунă. Анчах та хăй буржуалă националиссен тăшманла ĕçĕсене палăртса тăрă шыв çине кăларман, вĕсемпе çыхăннă пирки унашкал ĕçе вăл тума та пултарайман. Ахальтен мар ĕнтĕ, ăна парти Чăваш Обкомĕн малтанхи тăшманла руководстви йаланах çĕклесе хăпартса пынă. Мускаври килсенех, Судакова Чăвашгиз директорĕ, унтан парти Обкомĕн инструкторĕ тата шкулсен пайĕн пуçлăхĕ туса хураççĕ. Мĕншĕн тесен, Судаков тăшмансен йĕрĕ ĕçтала кайнине, вĕсем мĕн тунине пĕлсе тăнă, тăшманла ĕçсене пытарма пултарнă. Çавăнпа та Судаков буржуалă националиссем хушшĕ ĕçсене хапăл туса пыни, вĕсене çине тăрса хÿтлени çинчен „Чăваш Коммунĕ" хаçатра статйа тухсан, парти Обкомĕн руководствинче ларнă тăшман статйа авторне (Минейĕв йулташа), редакцине те темиçе хутчен те: „усăсăр кăшкăракансем" тесе питленĕ, Судакова тĕрĕсе кăларттарнă. Паллах, Судаков çинчен çырнă тĕрĕс пулнă статйана, Обкомăн кивĕ тăшманла руководстви хушнипе критически, тишкĕрсе пăхмасăрах „тĕрĕс мар тесе тÿрлетсе çырнипе „Чăваш Коммунĕ" хаçат йăнăш тунă. Халĕ ĕнтĕ Судаков кам пулнине, ăна парти Обкомĕн малтанхи тăшманла руководстви мĕншĕн хытă хÿтлевине ăнланма çăмăл. Судаков буржуалă националиссене хÿтленĕ çеç те мар, вăл хăй вĕсен контрреволюцилĕ „краеведени обшчĕстви" текен организацин активлă членĕ пулнă.

Судакова парти Обкомĕн малтанхи руководстви çĕнĕ стройка партком çекретарĕ пулса ĕçлеме йанă. Вăл унта партилĕ-политикăлла ĕçе пĕтерсе лартнă, ĕç дисциплинине пăсакансене, производствăри дезорганизатăрсене хÿтленĕ. Çак буржуалă националиссен кайашне партирен кăлармала.

Р. Шашков.

Германи хресченĕсем фашисăм пусмăрĕнче

Германи фашисĕсем влаçа йарса иличчен хресченсене тĕрлĕрен ырлăхсем пама пулнă. Вĕсем „процентлă чуралăха" пĕтерме, урăхла каласан, хресчен хуçалăхĕсен парăмне йĕркелеме тата вĕсем банксене пăхăнса тăрассинчен хăтарма шантарнă, „вим чăрмавсăр" çĕнĕ çĕрсене куçса ларма ирĕк пама пулнă. Улталас тĕллевпе фашиссем Германи хресченне пур майсемпе те астарнă, ăна вĕсем „Германин тĕп раси" тесе каланă. Анчах гитлĕрĕвĕцсем влаçа хăйсен аллине тытса илсенех, вĕсем капиталиссемпе помешчиксен чи шанчăклă тарçисем пулнине кăтартса панă. Хресченсем фашисăмăн чăнчăн природине часах тупанса илнĕ, илĕртсе тума пулнисем ирсĕр, вим вăтанмасăр улталани пулса тăнине практикăра курса пĕлнĕ.

Германи фашисăмĕн аграрлă политики пĕтĕмĕшпех промышлĕннăçăн тата çĕрĕçĕн пысăк хуçисен интересĕсене хÿтлет. Вăл политикă ĕççынни хресченсене çуклăха, выçлăха, чăтма çук хайар експлоатацине кĕртсе ÿкерет.

Германи йалĕсенче 41.395 пин гектар çĕр лаптăкĕшĕ çинче виçĕ мĕлйун хуçалăх шутланать. Çав çĕрĕн виç пайĕнчен икĕ пайне (65,8 проц.) помешчиксемпе кулаксем тытса тăраççĕ. Помешчиклакулакла хуçалăхсем, Германи йалĕнче пуçпулса тăрса, ытти мĕнпур хуçалăхсене те хăйсен аллинче тытса тăраççĕ, вĕсене тĕрлĕ майсемпе çавăрса илсе, вĕсен тарĕпе йунне ĕçсе тăраççĕ.

35 пин помешчикла хуçалăхсем мĕнпур çĕр лаптăкĕнчен 38 процентне хăйсем тытса тăраççĕ. 28 процент çĕр—300 пин кулаксен аллинче.

Тепĕр йенчен, 2.700 пин чухăнсемпе вăтам хресченсен хуçалăхĕсем çĕр лаптăкĕн 34 процентĕпе кăна усă кураççĕ. Çав хушăрах 1.600 пин чухă хуçалăхсен мĕнпурĕ те 8,5 процент çĕр çеç пур.

Чухăнсемпе вăтам хресченсен хуçалăхĕсем, мĕнпур хуçалăхсенчен 90 процентĕ шутланаканскерсем, пит те сахал çĕрсемпе усă курнă вăхăтрах, помешчиксемпе кулаксен аллинче калама çук нумай çĕрсем, чи лайăх çĕрсем тăраççĕ.

Пуринчен ытла Германин хĕвелтухăç районĕсенчи йалĕсенче хресченсен хуçалăхĕсем тарăхан сийленсе пыраççĕ, мĕншĕн тесен унта помешчикла хуçалăхсем вăйлăн ÿссе кайнă тата унта калама çук шултăра помешчикла хуçалăхсем пурăнаççĕ. Вĕсен çĕрĕсем вуншар пин гектар шутланаççĕ.

Помешчиксемпе кулаксен аллинче пĕр çĕр çеç тăмасть, тата йалхуçалăхĕн ытти мĕнпур сложнăй орудийĕсемпе машинĕсем те вĕсен аллинче тăраççĕ. Официаллă цифрăсем тăрăх, Германире тракторсене мĕнпур хуçалăхсенчен 0,8 процентĕ кăна тытса тăрать, грузовой автомобилсене—0,3 процентĕ, двигателсене—3,5 процентĕ тытса тăрать. Çакна пула помешчиксемпе кулаксен ĕççынни хресченĕсене пусмăрласа пурăнма пур майсем те пур. Çĕр пит сахал пулнипе тата йалхуçалăх орудийĕсемпе машинисем çуккине пула хресченсенчен нумайĕшĕсене çĕре тата йалхуçалăх орудийĕсене помешчиксемпе кулаксенчен тара илме тивет йе батраксем пулса вĕсем патне ĕçлеме кайма лекет. Германире 1.184 пин чухăн хуçалăхсем çĕре тара илнипе кăна пурăнаççĕ. Илсенче халичченех те вăтам ĕмĕрĕн йулашкийĕсем — „отработочная аренда" тенĕскер сыхланса йулнă-ха: помешчик пысăках мар çĕр татăкне хресчене тара парать; çакăншăн хресченĕн помешчике вăльди хăй тăр пĕччен çеç мар ĕçлемеле, тата унăн хăйпе пĕрле çемйери ытти членĕсене те ĕçлеттермеле.

Германи фашисăмĕ, тĕнчене çĕнĕрен империалисăмла валеçес тĕллевпе лартса, урса кайсах „пысăк вăрçăна" хатĕрленет. Çак хатĕрленÿ ĕçне рабочи класпа хресченсене хыттăн експлоататилесе, сарлака массăсен пурнăçне пăрмай чакарса пынипе туса пырать.

Паллă, ĕлĕк Германи хăйĕн çĕршывне кирлĕ мĕнпур йалхуçалăх продуктисен пĕр пайĕнчен тăватă пайне йут çĕршывсенчен кÿрсе тăнă. Германи фашисăмĕ, влаçа хăй аллине тытса илсен: „Çу вырăнне — тупăсем" текен лозунг кăларса тăратнă. Çак лозунга пурнăçа кĕртсе пырса, фашиссем йалхуçалăх продуктисене йут çĕршывсенчен кÿрсе килессине пысăккăн чакарса лартнă. Вăрçă хатĕрĕсем тумали сырйо ытларах кÿрсе килме пуçланă. Çакна пула продовольстви йăварлăхсем çивĕччĕн тухса тăнă. Германире 1936 çултах сĕт-çусем тĕлĕшпе карточкăсем туса хунă пулнă, вĕсене сутмали нормă пĕрмайах пĕчĕкленсе пырать. Çăкăра обйазательнă йĕркепе суррогатпа çăрса пĕçермеле. Германи пичечĕ „потреблениене сахаллатассишĕн" вăйлă кампани туса пырать, пичет халăха йепле пулсан та „ытлашши мар, вăхатлă" тăраса пурăнма, аш-какай, çу, çăмарта тата... çăкăра та ытлашши çимесĕр те пурăнма ыйтать.

Кăçалхи çул Германи фашисĕсем тырă кÿрсе килессине кăштах ÿстернĕ, анчах та ку вăл Германи çĕршывĕн продовольстви тĕлĕшĕнчи пурнăçне пĕртте лайăхлатман, мĕншĕн тесен кÿрсе килекен тырăсене вăрçă-мĕн пулсан кирлĕ запас вальли хатĕрленĕ çĕре йараççĕ.

Германи фашисăмĕн политики йалхуçалăхне хыттăн пырса тивнĕ. Фашиссем пилĕк çул хушши пуçпулса тăнă вăхăтра акмалли çĕр лаптăкĕ пĕр мĕлйун гектар чакнă. Çав çĕр фашиссене, пуринчен ытла, стратегилĕ çулсен, укреплениссен, аеродромсен тата ыт. те строительстви вальли кирлĕ пулнă. Тĕп тĕштырăсем (ыраш, тулă, сĕлĕ тата урпа) 1937 çулта 2,6 мĕлйун тонна, йе 1932 çултинчен, фашиссем влаçа йарса иличченхинчен, 10 процент сахал туса илнĕ.

Йалхуçалăх продуктисене кÿрсе килесси чакнипе пĕрлех выльăхсем вальли апат кÿрсе килесси те чакнă. Ку вăл выльăхсен шучĕ пĕрмай чакса пырасси патне илсе пынă. Германи статистикин официаллă цифрисем тăрăх, Германире сыснасен хисепĕ пĕр çул хушшинче — 1937 çулти çентабĕртен 1938 çулти çентабĕр уйăхне çитиччен — 8,2 процент чакнă. Апатсем çуккипе ĕнесем сĕт парасси те ÿкнĕ.

Çĕршывра продовольстви тĕлĕшĕнчен пысăк йăварлăхсем пуррине пула Германи фашисĕсем ĕççынни хресченĕсене татах та хыттăн хĕсме тытăннă. 1937 çулта çулла Германире саккун кăларнă. Вăл саккун тăрăх хресченсенчен пĕтĕм пуххе кĕртнĕ тырăри, хăйсене çиме тата вăрлăхлăх хăварнисĕр пуçне, вăйпах туртса илмеле. Тырăна, выльăх-чĕрлĕхсене, сĕте, çăмартана тата ыт. те фашисла влаçсем туса çирĕплетнĕ хаксемпе памала, вăл хаксем пасарти хаксенчен чылай пĕчĕккĕ. Хресченĕн хăй çемйипе тăранса пурăнма кăшт çеç тăрса йулать. Вăл саккун, хресченсене чăнкипех çаратакаскерĕ, Германи йалĕсенче пурăнакан халăхсене хыттăн тарăхтарса йанă. Хресченсем саккуна пурнăçа кĕртессине хирĕç хыттăн тăраççĕ, правительствă уполномоченнăйĕсене йалсенчен хăваласа кăларса йараççĕ, тырă парассине пур майпа та чăрмантараççĕ. Сăмахран, Ерлавген районĕнчи пĕр йаалт хресченсем выступлени тунă, вĕсем хăйсем паракан сĕте ытла та йÿнĕ хунине хирĕç пулнă. Вестфалири (Германири облăçсенчен пĕри) чылай йалсенче кăçалхи çулла хресченсен выступленийĕсем пулса иртнĕ. Выступленисем фашисла влаçсем хресченсем хăйсем вальли уйăрса хăварнă йалхуçалăх продуктисене парасси çинчен распорйажени кăларнă пирки пуçланса кайнă.

Германи фашисĕсем йалсене фашисла организацисемпе çавăрса илнĕ, çав организацисем хресченĕн кашни утăмне контроль туса тăраççĕ. Фашиссен йалсенчи тĕп организацийĕ вăл „Имперское сословие питания" (Рейхснерштанд) тенĕскер шутланать. Рейхснерштандăн вырăнти организацийĕсенче кашни хресчен килĕ вальлийех уйрăм карточкăсем тунă, вăл карточкăсем çинче хресчен мĕн чухлĕ тырă акса хăварнине, мĕн чухлĕ пуçтарса илнине, государствăна мĕн чухлĕ памалине тата ыт. те шута илсе хураççĕ. Çав Рейхснерштандах пасарсене те „йĕркелесе" тăрать. „Йĕркелесе тăни" çакă пулать: Рейхснерштандăн вырăнти организацийĕсенчен удостоверени илмесĕр хресчен хăйĕн продукцине пасара сутма илсе тухма пултараймаст. Вăлах хресченсем тырă памали обйазательствăсене мĕнле пурнăçа кĕртсе пынине те сăнаса тăрать. Çав обйазательствăсене вăхăтра пурнăçа кĕртмесен Рейхснерштанд организацисен хресчен хуçалăхĕсене сутма права пур.

Хулари çамрăксене ирĕксĕр ĕçлеттермеле йĕрке туса, Германи фашисĕсем çав майпа помешчиксемпе кулаксене йантă ĕç вăйĕ тупса панă. Рабочи çамрăкĕсем, помешчиксемпе кулаксем патĕнче „йалхуçалăх çулĕ" тенĕскерне ĕçлесе татнă хыççăн, ĕçленĕшĕн малтанах гарантиленĕ ĕçукçи илессине шанма пултараймаççĕ, вĕсен йалти експлоататăрсен «ирĕкĕпе паракан» укçи-тенкĕсем çине çеç шанмала.

Фашиссен çĕнĕ çĕрсем çине куçса лармали çинчен калакан политики пĕтĕмĕшпех арканса кайнă. Çĕнĕ çĕрсене куçса ларма уйăрса паракан çĕр лаптăкĕ çулсеренех пĕчĕкленсе пырать. Вăл çĕрсене чи малтанах кулаксене параççĕ. Чухăнсемпе вăтам хресченсен массисем малтанхи пекех çĕр сахаллипе аптраççĕ.

Гитлĕрла аграрлă политикă—вăл чухăнсемпе вăтам хресченсен массисене ним шеллемесĕр пусмăрламали политикă, йалти помешчикла-кулакла сийсене сарлакан пулăшмала политикă пулса тăрать.

Çакă вăл уйрăмах йапаласен хакĕпе кредит ĕçĕнче уççăн палăрса тăрать. Хресченсене государствăна тырă пама хушса, Германи фашисăмĕ

Улатăр хулинчи пионерсен çуртĕнче. Пионерсем канмалли пÿлĕмре.

Цыганов фото-ÿкерчĕкĕ.

Вăрман хатĕрлевĕ

Шĕмшешри комсомолĕцсен лайăх пуçарăвĕ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Шĕмшешри „Мотор" колхоз ку таранччен вăрман хатĕрлев планне тултарас тĕлĕшпе начар ĕçленĕ. Кун çинчен правлени ларăвĕнче те, колхозниксен пухăвĕнче те темиçе хутчен сÿтсе-явнă. Анчах ĕç малалла кайман. Мĕншĕн тесен ĕçе тĕрĕс организацилемен. Ăнлантару пулман.

Декабĕрĕн 2-мĕшĕнче колхозри комсомолĕцсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура вăрман хатĕрлевĕ йалăх пыни çинчен сăмах хускалчĕ. Çакăн хыççăн комсомолĕцсем вăрман хатĕрлевĕнче ĕçлеме бригадă организацилеме тата хăйсемпе пĕрлех колхозниксене, комсомолта тăман çамрăксене ĕçе мобилизацилеме пулчĕç.

Декабĕрĕн 3-мĕшĕнче комсомолĕцсем 60 çынна вăрманта ĕçлеме илсе кайаççĕ. Вăрмана çитсессĕн уйрăм звеносем организацилеççĕ. Звеноводсем пулса ĕçлеме пултаракан çынсене çирĕплетеççĕ. Тепĕр кунĕнче вăрман хатĕрлеме тытăнаççĕ. Çапла хĕрÿлĕ ĕç пуçланса кайать.

Вăрманта ĕçлекенсем хушшинче культмассăлă ĕçе аван йĕркеленĕ. Тĕнчере пулса иртекен ĕçсем çинчен калаçусем туса иртереççĕ. Культмассăлă ĕçпе хăйсен колхозĕнчи колхозниксем хушшинче çеç мар, тата Трактассинчи „Трудовик" колхозри колхозниксем хушшинче те ĕçлеççĕ. Икĕ колхоз членĕсем хушшинче агитатăр Тверсков 3 хутчен калаçу туса иртерчĕ. Декабĕрĕн 5-мĕшĕнче—Сталинла Конституцин икĕ çул тултарнă кун—Сталинла Конституци çинчен калаçу туса иртернĕ. Йулашкинчен вечĕр пулнă. Китайри, Испанири вăрçа ĕçсем çинчен калаçусем пулнă. Икĕ колхозпа пĕрле „Ударник" йатлă стена хаçачĕ кăлараççĕ. Унта вăрман ĕçĕнчи стахановĕцсем çинчен çыраççĕ. Вĕсен драмкружок пур.

Вăрманта ĕçленĕ вăхăтрах комсомолта тăман çамрăксене Михейĕва, Мытина тата Богатейĕв йулташсене комсомола илчĕç. Вĕсем ун хыççăн комсомолĕцсен бригадинче ĕçлеме пуçларĕç.

Стахановла йухăма вăйлатса пынă май ĕç тухăçлăхĕ чылайах ÿсрĕ. Комсомолĕцсем: Храмăв, Çеланкин тата Глухăвă йулташсем нормăна куллен 125 процент тултараççĕ. Нормăна ытлашшипех тултаракансен хисепĕ ÿссех пырать. Çапла 4 кун ĕçлесе IV-мĕш квартал планне 140 процент тултарчĕç.

Комсомолĕцсен бригади тата колхозниксем халĕ те вăрманта ĕçлеççĕ.

Шĕмшешри комсомолĕцсем ытти хуçалăхпа политикăлла кампанисенче те активлăн хутшăнса ĕçлеççĕ. Халĕ вĕсем колхозниксене перепись çинчен ăнлантарса параççĕ. Шĕмшешри комсомолĕцсен пахă пуçарăвне ытти колхозсене те сармала.

Йак. Çигайĕв.
Ал. Тверсков.

Хавасланса ĕçлеççĕ

МАН-СĔНТĔР. Жданов йачĕпе тăракан колхозăн Ардинари „Заглесдеталь" вăрман участкипе тунă догăвăр тăрăх 4-мĕш кварталта 1320 кубла метр вăрман касса, автоçул патне турттарса кăлармала.

Колхоз хăйĕн обйазательствине тултарма уйрăм бригадă организацилерĕ. Бригадăра 15 çын. Бригадă çентабĕр уйăхĕнче ĕçлеме пуçларĕ. Ĕçлеме тытăнсанах бригадă 4 звенона уйăрăлнă. Звеносем ăмăртса ĕçленипе малтанхи 5 кун хушшинче нормăна 110 процент тултарса пынă.

Кун хыççăн вĕсем лучковăй пăчкăсемпе ĕçлесси çине куçнă. Халĕ кашнийех нормăна 120 процент таран тултарса пыраççĕ. Çапла вĕсем догăвăра срукчен пурнăçа кĕртнĕ. Лайăх ĕçленĕшĕн колхоза Лестранхоз 1000 тенкĕ преми памалла палăртнă.

Пр. Йаркуцкин.

Уйра йур тытни тырпул тухăçлăхне ÿстерет

Пирĕн социализмла йалхуçалăхĕ тĕрлĕрен машинăсемпе хĕçпăшалланчĕ, совхозсемпе колхозсем агротехникăна анлăн пурнăça кĕртсе пыраççĕ. Çавăнпа та йалхуçалăхĕшĕн уйăр çанталăк текех хăрушă мар. Кăçал тырпулсене çитĕнме çанталăк начар пулчĕ. Çавнашкал çулсенче ĕлĕкхи вăхăтра патша Российĕнче пит начар тырпул пуçтарса илнĕ. Вара мĕлйуншар хресченсен çемйисем выçăпа аптранă, вилсе пĕтнĕ. 150 çул хушшинче пулнă чи уйăр çанталăкла çул—кăçал—пирĕн колхозсем вăйлă тырпул туса илчĕç, колхозниксем ĕçкунĕсем тăрăх тĕштырă тата пахча-çимĕçсем нумай илеççĕ.

Чи лайăх техникăпа хĕçпăшалланнă колхозсем çĕр ĕçĕнче агротехникăн çĕнĕ кăтартăвĕсене тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пынипе уйăр çанталăка, çут-çанталăкăн вăйĕсене çĕнтерме пур условисене те хатĕрлерĕç. Халь ĕнтĕ пирĕн йалхуçалăхĕнче темиçе çул хушши сăнаса пынă агротехникăн пур ĕçĕсене те вăхăтра пурнăça кĕртсе пымала.

Тăпрара нÿрлĕх пухас тата уйăр çанталăкпа кĕрешес ĕçсенче уйра йур тытса купалантарасси пысăк вырăн йышăнса тăрать. Пирĕн колхозсем тата колхозниксем уйра йур тытни вăйлă тырпул туса илес çĕрте мĕнле усă панине ăнланса илчĕç.

Уйра вăхăтра тата тĕрĕс йур тытса купалантарни тăпрара хушса тата 40—60 миллиметр чухлĕ нÿрлĕх тытса йулма пулăшать. Çапла вара, вăл çурхи тырăсене нÿрлĕ çĕр çине акса хăвармалла парать. Кунсăр пуçне тата хулăн йур çĕре тарăн шăнма чарать, çавăн пек çĕр çуркунне маларах ăшăнса çитет, нÿрлĕхе ытларах тытса йулать.

Опытсем кăтартса панă тăрăх йур тытнă вырăнта пĕр метр тарăнăшĕнче йур тытман вырăнтинчен 105 миллиметр чухлĕ нÿрлĕх ытларах пулнă.

Йур тытни кĕрхи тырăсене тата нумай çул хушши ÿсекен курăксене шăнасран, калчасем çинчи пăрсем сиенлесрен сыхлать. Кĕрхи тулă калчисем çинче йур хулăнăшĕ 20 сантиметр тарăн пулсан, вара вĕсемшĕн сивĕсем хăрушă мар.

Малта пыракан колхозсен опычĕсем кăтартса панă тăрăх, уйра йур тытни тырпул тухăçлăхне чылай ÿстерет. Чылай чухне гектартан тухăç 3,7—5,7 центнĕр ытларах пулать.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Обкомĕ „Чăваш республикинчи колхозсенче çирĕп тухăçлă тырпул туса илмелле тăвасси çинчен" йышăннă постановлени тăрăх кăçал пирĕн республикăри колхозсен уйхирĕсенче 200 пин гектар çинче йур тытса купалантармала. Çак заданине ытлашшипех тултармала. Кĕркунне çĕртме туса хăварнă, çуркунне çурхи тулă тата техникла культурăсем акмалли пĕтĕм лаптăксене йур тытса купалантарасси колхозсен хисеплĕ ĕçĕ пулмала.

Çак пысăк ĕçе—уйра йур тытса купалантарассине пурнăçа кĕртес тесен, ку ĕçе тĕплĕн хатĕрлесе тытăнни кирлĕ. Кашни колхозра кашни бригадăна уйра йур тытма задани памала. Йур тытма улăм кĕлтисем, шчитсем, лашасемпе ĕçлемелли виç кĕтеслĕхсем хатĕрлемелле.

Партипе правительствă кăтартăвĕ—ĕçĕн çирĕп программи пулса тăрать. Çавăнпа та ĕнтĕ колхозсенче уйра йур тытас ĕçе вăраха хăварса пымала мар. Ку ĕçе пурнăça кĕртме маларах тытăнни аван.

Йур тытас ĕçри шанчăклă мелсенчен пĕри вăл—шчитсем лартса тухни пулать. Йалхуçалăхĕнче, чукунçул транспортчĕн опычĕ тăрăх, йур тытассипе культурлă хуçалăх пулмала. Пирĕн колхозсенче ку тĕлĕшпе йĕркесем сахал-ха. Час-часах çакнашкал пулать. Малтан хатĕрленĕ шчитсене çуркунне пуçтармаççĕ, вĕсене унта-кунта салатса пĕтереççĕ, çитес çул валли каллех çĕнĕрен тума лекет. Çакнашкал хуçасăрлăха малашне пĕтерес пулать. Кашни шчита çирĕп учота илмелле, ăна лайăх пăхса усрамала. Çĕнĕрен хатĕрленĕ шчитсене, çавнашкалах киввисене те бригадăсем çумне çирĕплетсе памала. Кашни бригадăра шчитсене лайăх пăхса усрас йĕнĕпе уйрăм çын ответлă пулмала.

Йур тытассине ытти ĕçсем пекех йĕртсе пымала. Йур тытма мĕнле хатĕрленнине тата йур тытассине мĕнле пурнăça кĕртсе пынине тĕрĕслесси çеç. МТС работникĕсен тĕп ĕçĕ пулса тăмала.

Хĕл пулчĕ. Халь ĕнтĕ пĕр кун вăхăта тăсмасăр уйра йур тытса купалантарма хатĕрленсе çитмеле.

Йур тытассине организацилер

Кăçал кĕркуннехи уйăхсем шăрăх тăчĕç, çумăрсем пит сахал пулчĕç. Иртнĕ çулсенче çĕр кĕрхи çумăрсемпе вÿрленсе йулнă пулсан, кăçал кĕркунне 3 уйăх хушшинче те çумăр 21,3 миллиметр анчах çунă. Çавăнпа та çĕрти нÿрлĕх сахалланса пычĕ. Октябĕр уйăхĕнче те çумăрсем сахал пулчĕç. Çапла çĕр йур айне нÿрлĕх çитменлĕхсĕрипе кĕрсе йулчĕ. Çавăн пек çулта нÿрлĕх ытларах пухас çĕрте уйра йур тытни калама çук пысăк усă парать.

Çумăрсем сахал пулнипе кĕрхи тырă калчипе клевĕр калчисем ÿссе, тĕплĕн çирĕпленсе çитмесĕрех йур айне пулчĕç. Хĕрлĕ клевĕр сивве чăтаймасть. Çавăнпа ĕнтĕ кĕрхи калчасемпе клевĕрсем акнă лаптăксем çинче йур тытса купалантарсан питĕ аван. Кунта çакна та шута илес пулать: хăшпĕр вырăнсенче йур лармасть. Çакăн пек вырăнсене чи малтан йур тытма тăрăшас пулать.

Йур тытса купалантарас ĕçре тĕрлĕрен майсем пур. Шчитсем лартса тухни, йура сухалани т. ыт. те. Вĕсенчен чи лайăххи—шчитсем лартса тухни пулать. Шчитсен çÿллĕшĕ 150 сантиметр, урлăшĕ икĕ метр пулмала. Вăл шчитсене уйра пĕр пек, пĕр-пĕрин хушшинче 5 метр хушă хăварса лартса тухмала. Уйра çапă çыххисемпе те йур тытма пулать. Çапă çыххисен çÿллĕшĕ 70—80 сантиметр пулмала. Вĕсене уйра пĕр-пĕринчен пĕр метр хушă хăварса лартса тухаççĕ.

Çапасемпе те уйра йур тытса купалантараççĕ. Ку тĕлĕшпе нумай туратлă çăпасене уйра сапаласа пăрахаççĕ. Хăшпĕр чухне йура сухалаççĕ. Ку вара усă сахал парать тата йура сухаланă чухне кĕрхи тырă калчисене сийенлеме пултарать.

Улăмран тунă кĕлтесемпе йур тытса купалантарас пулсан, кĕлтесен тачкăшĕ 15—20 сантиметр пулмала. Вĕсене уйра пĕр-пĕрин хушшине икĕ метр вырăн хăварса лартса тухас пулать. Кĕлтесем тума таса, çумкурăксăр улăм суйласа илмеле. Çуркунне вара уйхир ĕçесем пуçланиччен улăмсене тĕплĕн тасатмала.

Уйра йур тытас ĕçе пур колхозниксемпе колхозницăсене те хутшăнтармала. Кашни бригадăн йур тытма хăйне панă заданине тултарассишĕн тăрăшса ĕçлемеле. Йур тытни усăллă пултăр тесен, ку ĕçе пысăк пахалăхпа ирттерни кирлĕ.

Агроном В. П. Орлов.

— О —

Химилĕ поход

Улатăрти транспорт комбинатĕнче вĕренекенсем нумай пулмасть противогазсем тăхăнса 5 километра поход туса иртерчĕç. Вăл походра хапрăк-савăт шкулĕнче вĕренекенсем малти вырăна тухса Хусан чукунçул управленин куçса çÿрекен хĕрлĕ йалавне илчĕç.

Декабĕрĕн 12-мĕшĕнче, ССРС Верховнăй Советне суйлани çулталăк тултарнă кун, противогазпа 10 километра поход туса иртерчĕç.

С. Федотăв.

кĕркуннепе памалли продукцине йÿнĕ хакпа, çуркуннепе памалли продукцине хаклă хакпа памалла тунă. Паллах, йалхуçалăх продукцине йалти пуйансем кăна çура тухиччен тытса усрама пултараççĕ. Чухăнсемпе вăтам хресченсем, налогсемпе тата тĕрлĕ парăмсемпе халран кайнăскерсем, продукцине кĕркуннепе параççĕ.

Германи фашисăмĕн кредит политикине йалти кулакла-помещикла сийсен интересĕсене хÿтлесмелле тунă. Кредитсене пурлăх мĕнлине кура параççĕ. Помещик йе кулак мĕн чухлĕ пуйан, вăл çавăн чухлĕ государствăран пысăк кредитсем илет. Вак-тĕвек хуçалăхсем, государствă йенчен нимĕнле пулăшу та курайманскерсем, ирĕксĕрех спекулянтсемпе ростовщиксем патне кайаççĕ, лешсем вара кивçен парса „пулăшнăшăн" тĕлĕнмелле пысăк процентсем сăптăраççĕ. Çапла туни вăл хресченсене експлоататăрсен картинче тата ытларах арпаштарса йарать.

Германи фашисăмĕ хресченсене налогсемпе пăвса тăрать, çав налогсемпе вăл вăрçă расхочĕсен пысăк пайне витсе тăрать. Парижра тухакан фашисăма хирĕçле „Дейче информационен" йатлă бÿллетен кăтартнă тăрăх, Германире налог халĕхи вăхăтра 1932—33 çулхисенчен икĕ хут ытла шăйăраççĕ. Куллен кирлĕ таварсем çине хуракан налогсем пĕрре çурă хут ÿснĕ.

Вак хресчен хуçалăхĕсем налогсене шултăра хуçалăхсенчен темиçе хут ытларах тÿлеççĕ. Сăмахран, Германин хĕвеланăç йенче 5 гектар таран çĕр тытакан вак хуçалăхсенче кашни гектар çине хуракан налог 100 гектар ытла тытакан шултăра хуçалăхсем çине хуниччен виççĕ çурă хут ытларах хураççĕ. Кунтан ĕнтĕ курăнать, налогсен йăвăрлăхĕ чухăнсемпе вăтам хресчен хуçалăхĕсем çине тивет.

Налог хурасси ÿссе пыни хресченсене пысăккăн кăмăлсăрлантарать, вĕсем налог пухакан сборщиксене пĕрмаях хирĕç тăраççĕ тата налогсене пачах тÿлемесĕпĕр тесе вĕсене йалсенчен хăваласа кăларса йараççĕ. Налог пухасси час-часах штурмовиксемпе охранниксен каратĕлни експедицисем хутшăннипе пулса иртет. Сăмахран, Брÿккен тата Биркенфельд йалĕсенче (Рейн облаçĕ) налог сборщикĕсене хирĕç хресченсем организациллĕн тухнă. Хресченсене пусарма штурмовиксем йанă пулнă. Çав йалсенче халиччен тăнă штурмăлă отрйадсене, вĕсем шанчăксăр тесе, салатса йанă. Хĕвелавăç Германире фашиссене хирĕç çырнă листовкăсем пысăккăн сараласçĕ, вăл листовкăсене хресченсем хăйсем çырнă. Хресченсем чăтма пултармала мар йăвăр налогсене пăрахăçа кăлармалла, выльăхсем валли апат çителĕклĕ таран тупса пама тата выльăхсем сутăн илме государствă йенчен пулăшу пама ыйтаççĕ. Кун пек фактсем—пит нумай.

Уйрăмах Германири ĕççынни хресченĕсене „закон о наследственном дворе" текенскер хыттăн тарăхтарать, вăл саккун халĕхи вăхăтра Германи йалĕнчи мĕн пур пурнăçпа йалине тапса парать. Çав саккун тăрăх „наследствăлă хресченĕн" çĕр участки вакланма пултараймасть. Çĕр хуçи вилсен участкă пĕтĕмĕшпех унăн аслă ывăлĕ çине куçать. Кĕçĕн ывăлĕсем куçса çÿрекен пурлăхăн пĕр пайне çеç илме пултараççĕ, çавăнпа та вĕсене хулана тухса кайма тивет, унта вара ĕççĕр тăрса йулнисен шутне кĕреççĕ, йе помещиксемпе кулаксем патне ĕçлеме кĕреççĕ. Çак саккун хресчен çемйинчи пурнăçа ишĕлтерет. Çакна май хресченсен аслă ывăлĕсемпе кĕçĕн ывăлĕсем хушшинче çивĕч кĕрешÿ тухса кайать. Германи фашисĕсем чи малтанах çак саккуна йалсенче хăйсен влийанине çирĕплетес, „наследствăлă хресченсене" фашисла режим йĕннеле туртăнтарас шутпа туса хунă.

Çапла вара, Германири ĕççынни хресченĕсен пурнăçĕ çĕр сахаллипе, уйхирсем техника йенчен начар хĕçпăшаланнипе тата тухăçсăр тырă туса илнипе, налог прессĕ калама çук хытăн хĕснипе, хресчен капиталисăмлă трестсене, банксене, помещиксемпе кулаксене пĕтĕмĕшпех пăхăнса тăнипе, хресченсем тĕлĕшпе фашисла влаçсем вăйлă та хăрушă террор туса пынипе паллă пулса тăрать. Çавăн пек тарăхтарса çитерни час-часах çивĕч формăсене кĕрсе кайать. Нумайах пулмасть фашисăма хирĕçле пичет пĕлтернĕ тăрăх, çак çулăн варринче Берлинра чи пысăк пасарта хресченсемпе полици хушшинче тытăçу пулса иртнĕ, тытăçу хресченсем фашисăмăн йалхуçалăх тĕлĕшĕнчи политикине хирĕç тăнă пирки пулнă. Йалсенче пур çĕрте те халлĕхе хресченсен уйрăм выступленийĕсем пулса иртеççĕ.

Хресченсем хушшинчи малта пыракан елементсем фашисăма хирĕç кĕрешекен фронта, рабочи класăн фашисăма хирĕçле революцилĕ кĕрешĕвне активлăн хутшăнса пыраççĕ.

А. Тагашевский.

Николай Островский

(Вилнĕренпе икĕ çул çитнĕ тĕле)

„Етемшĕн чи хакли—вăл пурнăç,—тет Островскин «Хурçă йепле хĕрнĕ» романĕнчи герой Павел Корчагин.—Вăл уншăн пĕрре кăна, çавăнпа та ăна йĕркелĕ пурăнса иртермеле: кайран ахаль иртсе кайнă çулсемшĕн ÿкĕнсе чуна ыраттармала ан пултăр, ăсти-çуксемпе иртсе кайнă илемсĕр вăхăтсемшĕн мăшкăл курса тăмала ан пултăр, çапла вара вилнĕ чухне етем акă мĕнле калама пултартăр: мĕн пур пурнăç, тата мĕн пур вăйăм-халăм тĕнчере чи лайăххишĕн—етемлĕхе ирĕке кăларассишĕн—çĕкленнĕ кĕрешÿре хĕлхемленсе тăчĕç. Çавăнпа та пурăнма васкамала. Вĕт йурăхсăр чир йе мĕнле те пулсан трагедилĕ самантсем те сан пурнăçна татма пултараççĕ".

Ку сăмахсем Николай Островскине хăйне питĕ аван сăнласа кăтартаççĕ. Унăн вăрăм мар мĕн пур кун-çулĕ пĕтĕмпех, ним йулмиччен, «тĕнчере чи лайăххишĕн—етемлĕхе ирĕке кăларассишĕн—çĕкленнĕ кĕрешÿре» иртнĕ. А етемлĕхĕн çутă кунĕшĕн çĕкленнĕ кĕрешÿре мĕнле çапăçса çĕнтермелине вăл большевисăма вĕреннĕ çĕрте, Ленин—Сталин партийĕн ретĕнче хăнăхнă.

Островский халăх хушшинчен тухнă çын. Вăл нумай нушаланнă, ĕçпе кĕрешÿ витĕр тухнă. Вăл 1904 çулта çуралнă. Амăшĕ кухаркă пулнă, пиччĕшĕ—Шепетовка станцинчи слесăр. Пулас писатĕл хăйĕн ĕçри стажне станцă буфетĕнчи «ачаран» пуçланă, 12 çултах тара кĕрĕшсе ĕçлеме тытăннă.

Октябĕрти Аслă революци пуçланнă. Вунпиллĕкри ача 1919 çулта комсомола кĕрет. Островский граждан вăрçинче пулнă, темиçе хутчен питĕ йăвăррăн аманнă. Граждан вăрçи хыççăн вăл—Волынинче, комсомол ĕçĕнче. 1924 çулта Николай Островский большевиксен парти ретне кĕнĕ.

1926 çулта Островский йăвăр чирлет. Кĕске кăна автобиографийĕнче вăл хăйĕн асаплă чирĕ çинчен акă çапла çеç каласа парать:

„Йăвăр чир мана стройран кăларчĕ. 1930 çулччен организацилĕ ĕçре пулман. Вырăн çинчен тăраймастăп. Суккăр пултăм. Пропагандист ĕçĕпе çеç ĕçлетĕп, парти вĕренĕвĕн кружокне йĕртсе пыратăп. Çак çулсенче коммунисла университета килте вĕренсе пĕтертĕм.

1930 çулта писатĕл пулса çĕнĕрен стройа кĕтĕм".

Чирлĕ, суккăр, вырăн çинчен те тăрайман çын писатĕл, пурнăça вĕрентекен, мĕлйунсенĕн тусĕ пулса тăни çинчен çак кĕске сăмахсем те уçăмлăн каласа параççĕ. Çак сăмахсенче мĕн чул хастарлăх, тапса тăракан вăй, большевик тивĕçлĕхне тĕрĕс тытни! Хăвăншăн çеç, хăвăн тыткăнăнта çеç пурăнмалине Островский ăнлама пултарайман. Ăна чĕрĕ çынсем кирлĕ пулнă. Пурнăç теми уншăн хăвна коллектива тытăмне парăнтарасси, ĕççыннисемшĕн ĕçлесси, социализмăн çĕнтерсе килекен кĕрешĕвне хутшăнасси пулса тăнă. Врачсем йалан чирлĕ çынна канлĕх кирлĕ, тенĕ,—Островскин канас килмен, унăн—ĕçлес те кĕрешес килнĕ. Хăйĕн сывлăхĕ йăвăрланса килнĕ пулсан та аслă çарăн активлă кĕрешÿçи пулма май шыранă вăл. „Пĕр етемрех сава итлемен сутăнчăклă ÿтпе большевик чĕри, унăн ĕç патне туртăнакан чарусăр ирĕкĕ,—тесе çырнă Павел Корчагин хăйĕн пиччĕшĕ патне,—сирĕн пата, штурмăн хурçă лавини çĕкленсе саралакан çĕре, мĕн пур фронтпа малалла тапăнса пыракан çарсен ретне туртăнакан ирĕке пĕрлешнĕ хыççăн тата та тĕлĕнмелерех трагеди пулĕ-ши?"

Кусем Корчагин сăмахĕсем, тата çав вăхăтрах Николай Островскин сăмахĕсем те пулса тăраççĕ. Островскин пурнăçĕ вăрăма пымарĕ, анчах та вăл вĕри йунпа туллин тапса тăракан пурнăç пулчĕ. Вăл нумай пиçнĕ, нумай çынсене курнă, вăл хăйĕн пысăк пултарулăхĕпе партишĕн, унччен штыкпа кĕрешнĕ пек, перопа кĕрешме тытăннă. Вăл çĕнĕрен ĕçе тытăннипе çеç мар, тата пысăк пултарулă деятель пулса тăчĕ, вăл икĕ кĕнеке: „Хурçă йепле хĕрнĕ" тата „Тăвăлпа çуралнисем" çырчĕ. Çакă кĕнекесенче большевик-писатĕлĕн чĕререн шăранса тухакан ĕненмеле вĕри сăмахĕ вулакансен масси умне тухрĕ.

Островскин пирвайхи романĕнчи герой—Павел Корчагин. Вулакан, совет çынни, ăна çавăнтах хăйĕн тусĕ пек йуратрĕ. Совет çамрăкĕсемшĕн вăл пример, чăн-чăн большевикăн, тасалăхпа героисăмăн сăнĕ пулса тăчĕ. Павел Корчагин пурнăçĕ çинчен каласа пани вăл массăсене çĕнтерÿлĕ кĕрешĕве илсе кĕнĕ большевикла кадрсем мĕнле пиçĕхсе пыни çинчен калакан калав.

Павел ача чухнех социаллă тамарлăхăн киревсĕрлĕхне сиссе ăна хирĕç тăнă. Кайран вăрçа пуçланнă, революци пулнă, тата граждан вăрçи. Ĕçри ача революцилĕ ĕçсен вĕресе тăракан шкулĕнче хăвăрт çитĕннĕ. Вăл хăйĕн тусĕсене, ăна çитĕнтерекен Шухрай матрос пек большевиксене тупнă. „Матрос хăйĕн çулне çирĕп пĕлсе тăнă, вара Павел илемлĕ йатсемлĕ темиçе тĕрлĕ партисен мĕн пур çăмхи—социалист-революционерсем, социал-демократсем, Польшăри социалиссен партийĕ—рабочисен усал тăшманĕсем иккенне, тата мĕн пур пуйансене хирĕç çирĕп тăрса кĕрешекен революцилĕ парти пĕр большевиксен партийĕ çеç пулса тăнине ăнланакан пулнă".

Павел пурнăçĕнчи хăйлĕхпе обчăлăх хушшинче нимĕнле шыв йуххи те пулман. Йуратупа йулташлăхра вăл çавăн пекех принциплă, тĕреклĕ тăракан большевик пулса тăнă. Вăл йуратнă хĕрне каçарма пултарайман, мĕншĕн тесен лешĕ вак буржуалă суйа пĕчченлĕхпе çураçăннă, тутă канлĕхеле туртăннă—вăл ăна пăрахнă. Арăмĕпе вăл питĕ туслă пулнă, вĕрентне ăна, çын пулса, общественник пулса ÿсе çитĕме пулăшнă, ăна парти ретне кĕме хатĕрленĕ.

Корчагин пурнăçĕ—таса чĕрелĕ большевикăн политикăлă кĕрешĕвĕ тата ĕçĕ пулса тăнă. Сывалнă-сывалманах вăл, çĕршывăн вĕресе тăракан политикăлă пурнăçĕнче мĕн пур вăй-халне хурса ĕçлес тесе, татах хуланала туртăнать. „Вăл ыран пысăк хулана кайап тесе савăннă, унта унăн йулташĕсем йулнă, йулташĕсем—ун чĕришĕн хаклă çынсем. Пысăк хула хăйĕн чĕр пурнăç хăвачĕпе васкавлă çынсен чарăна пĕлмен йухăмĕпе хăй патне туртать. Кунтан та ытларах чул корпуссене, хăрăмлă цехсене, машинăсем кĕрленĕ çĕре, шкивсем хуллен кăштартатнă çĕре кайас килет..."

Рабочи клас, пĕтĕм ĕççыннисем революци кĕрешсе илнисене хÿтĕлеме парти тавра пĕтĕçсе тăнă. Çав вăхăтрах троцкисла çĕленсем, иртĕхнĕ сутăнчăксем, буржуалă контрразведкăсене тара кĕрĕшсе ĕçлекен шпионсем, Ленин чирĕпе вилĕмĕ çине кăтартса партин пĕрлĕхне çĕмĕресшĕн пулнă. Ленин хушăвĕсен тасалăхĕшĕн Корчагин мĕнле тăнине Николай Островский хĕрÿлĕ витĕмлĕхпе каласа кăтартать. Ăна Островский хăй большевисăм идейĕшĕн вăл хăй мĕнле кĕрешнине, хăйĕн канăçсăр таса чĕрин мĕн пур тапса тăракан хавалĕпе мĕнле кĕрешнине аса илет. Троцкисла тата ытти иудăсен улталла ĕçĕсене, вĕсен сутăнчăкла хăтланăвĕсене вăл класлă çивĕч сисĕмпе, партилĕ туйăмлăхпа ăнланса, сиссе пынă. Вăл „ÿкĕнекен" троцкиссене ĕненмен. Кун пирки вăл, йаланхи пекех таса шухăш тытнă, хытă тăнă.

Комсомол ĕçĕсене йĕртсе пыракан пулса тăрса, Корчагин политикăпа йăла тĕлĕшĕнчен пăсалса кайнисене нихăçан та каçарма пултарайман.

„Хурçă йепле хĕрнĕ" повĕç хăйĕн характерĕпе автобиографилĕ произведени пулса тăрать. Корчагин, Островский хăй чирленĕ пекех йăвăр чирлевĕ, тата Островский пекех, партине писатĕлĕн витĕмлĕ сăмахĕпе пулăшмалăх вăй, хастарлăх тупнă.

Повĕç Корчагинăн алçырăвне издательствă ырлани çинчен килнĕ хыпарпа пĕтет. „Тимĕр унка таталчĕ, вăл каллех—халĕ çĕнĕ хĕçпăшалпа—стройа, пурнăç патне таврăнчĕ".

Николай Островскин иккĕмĕш произведенийĕ—„Тăвăлпа çуралнисем"—çырăнса пĕтмесĕр йулчĕ. Вăл граждан вăрçи çинчен калать. Унăн геройĕсем—пуринчен ытла çамрăксем. Çак кĕнекене вулакан умне икĕ лагĕр, икĕ строй тухса тăрать. Пĕри вăл—хăйĕн „культурипе" те пуйанлăхĕпе кĕшĕлтетекен буржуазин лагĕрĕ—експлоатаципе пусмăр йĕрки, тепри—кĕрешÿре социализмăм тăвакансен йĕрки—ĕççыннисен революцилĕ лагĕрĕ.

Буржуазин лагĕрĕ хĕрхенÿсĕр уракан ытăсен кĕтевĕ пулса тăнине, тата çак тапхăрти етемлĕхĕн, культурăн, прогреспа гуманизмăн чăн-чăн представительĕсем Маркс—Енгельс—Ленин—Сталин йалавĕ айне тăнă большевиксем, рабочисем, ĕççыннисем пулнине Островский пултарулăн, ĕненмеле сăнлăхсемпе кăтартса парать.

Николай Островскин пурнăçĕпе творчестви большевисăмăн аслă пафоспе çыхăнса тăнă. Вĕсем—йăла тасалăхĕн, паттăрлăхăн, хăйĕн вăйĕ çине ĕненнин ĕмĕр-ĕмĕр тапса тăракан çăлкуçĕ. Вĕсем коммунисăм ĕçĕшĕн тăракан ирĕклĕх мĕнле пысăк результатсем пама пултарнине ĕненÿлĕн кăтартса параççĕ.

В. Кирпотин.

ТАСС пĕлтерни

Декабĕрĕн 16—19-мĕшĕсем хушшинчи вăхăтра СССР тулашри суту-илӳ ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ Микойан йулташпа Поļшăн промышлĕннăçпа суту-илӳ министерствин суту-илӳпе политика департаменчĕн директăрĕ г. доктор Лыховский хушшинче Совет Сойузĕпе Поļшă хушшинче суту-илӳ оборотне пысăклатасси çинчен калаçусем пулса иртнĕ.

Çак калаçусем тăрăх икĕ çĕршыв хушшинче суту-илӳ оборотне пысăклатма май пурри паларнă, ăна çулталăкне 140—160 мĕлйун злотых тарана çитерме пулаţ.

Икĕ йенчен те, 1939 çулти йанварте Совет Сойузĕпе Поļшă хушшинче суту-илӳ калаçăвĕсем пуласпирки калаçса татăлнă, çав калаçусен никĕсĕнче çак принципсем пулмала: таможеннăй пошлинăсем тата суту-илӳвĕн ытти ыйтăвĕсем тĕлĕшпе ытларах çăмăллăхсем тăвасси, клиринг тăрăх пĕр çĕршывран тепĕр çĕршыва тавар сутассине тата илессине пĕр виçелĕрех тăвасси.

Çак калаçусем тăрăх, Социалисăмлă Советлă Республикăсен Сойузĕпе Поļшă Республикĕ суту-илӳ догăвăрĕ, 1939 çулта тавар илмелли тата сутмалли виçесен пысăкăшĕ çинчен килĕшӳ, клиринг çинчен килĕшӳ тăваççĕ.

Çак килĕшӳсенче икĕ çĕршыв хушшинчи тавар çаврăнăшне тивекен пур ыйтусене те татса параççĕ.

18 тинĕс тата 3 океан урлă

„Челюскинец" теплоход рейсĕ

ЛЕНИНГРАД, декабĕрĕн 20-мĕш. Ыран Ленинграда „Челюскинец" теплоход таврăнаţ, вăл тĕнче тавра тухнă рейса ăнăçлăн вĕçлерĕ. Теплоход капитанĕнчен Баглай йулташран радиограмма илнĕ, вăл радиограммăра çапла калаţ:

— Епĕр тăван çĕршывăн сыравĕсем патне таврăнатпăр, пирĕн хыçа 30.581 миļă йулчĕ. 18 тинĕс тата 3 океан урлă ишсе тухрăмăр. Çак инçе çула епĕр майăн 21-мĕшĕнче Одессăран тухрăмăр. Хура тинĕс тата Вăтаçĕр тинĕс, Суецкий каналĕ, Индипе Лăпкă океансем урлă ишсе пирĕн теплоход Владивостока çитрĕ. Унтан „Челюскинец" Панамă çинелле çул тытрĕ. Атланти океанĕ, Ирландипе Çурçĕр тинĕсĕсем урлă ишсе Балти тинĕсĕ çине тухрĕ.

Тĕнче тавра тухнă рейсăн планне епĕр 112 процент тултартăмăр. Ишнĕ чухне пирĕн екипаж тăршшĕпех стахановла ĕçлерĕ. Судна механизмĕ пĕр кăлтăксăр ĕçлерĕ.

* * *

Çак кунсенче Ленинграда „Ашхабад" пăрахут таврăнна. Вăл та тĕнче тавра ишсе çаврăнна. Унăн капитанĕ Баглай ывăлĕ пулнă.

Ыран икĕ мухтавлă капитан пĕр-пĕринпе тĕл пулаççĕ, вĕсем иккĕшĕ те тĕнче тавра ишсе çаврăнассине çав тери чаплăн вĕçленĕ.

(ТАСС).

Обшчинăсен палатинчи прени

Декабĕрĕн 19-мĕшĕнче обшчинăсен палатин ларăвĕнче лейборис Даļтон лейбориста оппозицийăн ячĕпе Англи правительствине шанас марри çинчен резоļуци тăратнă. Резоļуцине малтан пулса Даļтон: йулашки 7 çул хушшинче правительства политики хăрушăсăрлăх системине çĕмĕрсе пычĕ, çĕршыв оборонине вăйсăрлатрĕ, çавна вара Англи уместе пысăк хăрушлăх кăларса тăрарĕ, тенĕ.

Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи ĕçсем çинче чарăнса тăрса, Даļтон: Лигă нацин членĕ пулса тăракан, Йапони агрессине хирĕç кĕрешекен Китайа правительствă пулăшу пама шутлаţ-и, тесе ыйтнă. Кун хыççăн Даļтон: Мӳнхĕнра килĕшӳ Йевропăна лăпкăлăх кӳмерĕ. „Халăхи вăхатра Йевропăра мĕн чухлĕ-те пулин хăрушлăхсăр чикĕ тума пулаţ-ши вара? тенĕ.

Чехословакири ушăмнах—Закарпатски Украинăри ĕçсем çинче чарăнса тăрса Даļтон Чемберленран, Хĕвелтухăç Йевропăра капланса килекен хăрушлăха чарас тĕлĕшпе правительства мĕн тума пултарни çинчен каласа пама ыйтнă.

Малала Даļтон Чемберленран: йулашки вăхатра Чехословакире пулна событисем, ушăмăн илсе килесен пĕтĕм Чехословаки витĕр тухакан коридор тума сĕнни, Англи Чехословакин çĕнĕ чиккисене гаранти тума пулнине мĕн тăран пырса тивет тата Чемберлен Германие пĕтĕм Хĕвелтухăç Йевропа картине вăкласа тухма ирĕк пама шутланвасţ-и, тесе ыйтнă. Даļтон çавăн пекех тата Чемберленран: Англи правительстви Англин Вăтаçĕр тинĕсри прависене сыхлас тĕлĕшпе мĕн тума шутлани çинчен пĕлтерме ыйтнă.

И пьнири ĕçсем çинче чарăнса тăрса, Даļтон: правительствă çав ыйту тăрăх мĕнле позици тытни çинчен оппозици Чемберленран уççăн каласа пама ыйтаţ, тенĕ. Вăл: парламент килĕшӳ памасăр Франко генерала вăрçă вăрçакан йенĕн правине парас çук, тесе шантарнă.

Даļтона ответлесе, Чемберлен хăйĕн сăмахĕнче Англипе Франци интересĕсем пĕр пек пулнине катартнă. Англипе Франци тусла татчăн сыхăнтараţ, тенĕ. Испанири ĕçсем çинче чарăнса тăрса Чемберлен, йулашки уйăхсенче Франко генерала „пăртакках çапăрса тата хĕçпăшал парса пулăшна", тенĕ. Çак пулăшăва пăртаках Итали панă пулмала, тенĕ Чемберлен. Анчах та ыйту тухса тăраţ,—тенĕ вăл малала,—Франко генерала Итали пулăшнине—Итали правительстви, Англипе Итали хушшинче тунă килĕшӳ тăрăх хăй çинчен илнĕ обйазательствăсене пăсма пултармала тăранах пысăк пулăшу теме пулаţ-ши?"

Палатă çакна шанса тăма пултараţ: правительствă Испанире мĕн вăрçă пуçланнăранпа варах тытса пыракан принципсенчен кайала чакас çук. Франко генерала вăрçă вăрçакан йенĕн правине парасси çинчен тăракан ыйтăва илес пулсан, „епĕ тата тепĕр хут: Испанире йут çĕршыв çарĕсем йулнă вăхатра, Испани ыйтăвне йĕркелесе йама урăхла решени тупман вăхатра, Англи правительстви Франко генерала вăрçă вăрçакан йенĕн правине пама, Испани ĕçне хутшăнас мар тĕлĕшпе ĕçлекен пĕтĕм тĕнчери комитет йышăннă Британи планĕ çинче кăларса тăратнă условисемсĕр пуçне урăх нимĕнле услови тăрăх та килĕшмест,тесе калама пултаратăп" тенĕ.

Англипе Германи хушшинчи ĕçсем çинче чарăнса тăрса Чемберлен çапла калана: Англи правительстви Германипе сыхăнса тăрас ĕçре Мӳнхĕнри декларацире çырса хунă принципсем тăрăх ĕçлет.

Малала Чемберлен: Инçет-Хĕвелтухăçĕнче правительствă Англин Китайри интересĕсене сыхлас тĕлĕшпе тумалисене пурне те тăвĕ тенĕ.

Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенчи фашисла шпионаж

Йулашки вăхăтра Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенче фашиссен пысăк шпионла организацийĕсене чылай тупса палăртнă. Нумайах пулмасţ-ха Германин шпионла центрĕн процесĕ пулса иртрĕ, çав процес ĕнтĕ Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенче ĕçленĕ шпионла бандă Германи правительствипе тӳррĕмех çыхăнса тăнине кăтартса панчĕ. Процес кăтартса панă тăрăх, Германи шпионĕсем тинĕс-çар учрежденийĕсене, авиаци предприйатийĕсене, çара кĕрсе пытаннă.

Хаļхи вăхăтра Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенче çĕнĕ процес пыраţ. Германи шпионне Ганс Шакăва суд тăваççĕ. Германи разведки панă заданисем тăрăх, вăл Панамă каналĕнчи çар укреплениийĕсем çинчен çекретлă сведенисем пухнă; вăл канал Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсемшĕн пысăк вырăн йышăнса тăраţ. Шакăв шпионĕ, вăл тупăсемпе çар укреплениисем мĕнле вырнаçса тăнине фотоаппаратпа ӳкерсе тăнă вăхăтра арĕсленĕ. Унпа пĕрле Германин тата виçĕ шпионне арĕсленĕ, вĕсене те çывăх вăхăтсенчех суд тăваççĕ.

Германи фашисăмĕн шпионла агентурисĕр пуçне, Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенче тата Йапони разведки шпионаж ĕçне активлăн сарса пыраţ. Панамă каналĕн районĕнче шпионсем хăйсене Йапонин пулăçĕсем пек кăтартса ĕçлеççĕ. Канал районĕнче Йапонин „пулă тытакан" суднисем çĕршерĕн çӳреççĕ. Вĕсем çинчен Йапони разведчикĕсем Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен тинĕс-çар флочĕ ӳçса çӳренисене, унăн маневрĕсене сăнаса тăраççĕ.

Çĕршыв ăшĕнче — Колорадо, Утах тата ытти штатсенче, çавăн пекех тата Центр Америкăра Йапони шпионĕсен вăйлă организацийĕ шпионла ĕçсем туса тăраţ. Çывăх кунсенчех Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенче Йапони шпионне Доеммонда, Америкăри авиаци предприйатийĕсенчен пĕринче механик пулса ĕçленĕскерне, суд тума пуçлаççĕ. Çак шпион Американ çĕнĕ типлĕ самоļочĕсен черţожĕсене 150 черţожа йахăн вăрланă тата Йапонин Лос-Анжелосри консуļствипе çыхăну тытса тăнă.

Сахал мар çĕрте Йапонипе Германи разведчикĕсем пĕрлешсе ĕçлеççĕ. Сиеттлре (Вашингтон штачĕ) шпионсен йатарласах палăртса хунă пункт пур, унта вĕсем хăйсем тупнă сведенисене пĕр-пĕрне параççĕ.

Пытанса ĕçлес шутпа фашисла разведчиксем тĕрлĕрен организацисемпе усă кураççĕ. Германи разведки, сăмахран, Германин пăрахут компанийĕсемпе, турисла компанисемпе, суту-илӳ фирмисемпе, банксен представительствисемпе тата ытти çавнашкаллисемпе анлăн усă кураţ. Çак организацисен служăшчийĕсем пек, суту-илӳ специалисĕсем пек тата курса усăлса çӳреме тухнă çулçӳревсем пек туса, Германи разведки Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсене хăйĕн пит нумай агенчĕсене йараţ.

Германин Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штачĕсенчи шпионĕсене Германин Америкăри тĕрлĕрен фашисла организацийĕсем („Америкăпа Германи сойузĕ" т.ыт.те) анлăн пулăшса тăраççĕ.

Германи шпионĕсен йулашки вăхăтра пулнă процесĕсем Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенчи обшчественнăçа хытăн шухăшлаттарнă. Калас пулаţ, нумайах пулмасţ-ха Америка обшчественнăçĕ фашисла шпионсен ишĕлтерӳлĕ ĕçĕсем çине çаврăнса пăхмасăр иртсе пынă. Реакцилĕ пичет вара, Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенче Германи разведчикĕсем çук та вĕсем, тесе кăтартса çырнă.

Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсенче Германи шпионĕсене суд тунисем çакăн çинчен тата тепĕр хут кăтартса параççĕ: фашисла агрессăрсем урса кайсах вăрçа хатĕрленеççĕ, йут çĕршывсене туртса илмелли планĕсене пурнăçа кĕртес ĕçре вĕсем нимĕнле меллĕ сенчен те йĕрĕнсе тămаççĕ. Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсен правительствинче тăракан çынсем тата Америкăри обшчественнăçĕ çакна ĕнтĕ пит те уççăн курса ĕненчĕç.

Китайри вăрçă

(Чунцинран, Шанхайран тата Лондонран ТАСС корреспонденчĕсем пĕлтернĕ тăрăх)

Центр Китайра

Хунаļ провинцин çурçĕр пайĕнче Китай çарĕсем наступлени тăвассине вăйлăн сарса пыраççĕ. Китай çарĕсен малти чаçĕсем Иочжоуран 10 километрта (Ухаļрен кăнтăр йеннерех) тăракан района çитнĕ. Йапонин Иочжоури гарнизонĕ пĕр бригадăран тăраţ. Декабĕрĕн 18-мĕшĕнче Йапони бригадин составне кĕрекен 1000 çын Иочжоуран çурçĕрелле чакнă. Талина (Иочжоуран çурçĕр - хĕвелтухăçнелле) йышăнса тăракан йапонĕçсен чаçĕсем хăйсен вырăнĕнчен чакма хатĕрленнĕ май, телеграфпа телефон çыхăнăвĕсене татса çĕмĕрсе пĕтереççĕ.

Хубей провинцин çурçĕр тата центрти пайĕсенче пысăк мар çапăçусем пулса иртеççĕ.

Наļчанрен (Цзйанси провинцин столици) çапла пĕлтереççĕ: декабĕрĕн 18-мĕшĕнче çĕрле китайĕçсен батаļйонĕ Сӳхе шывĕ çине вăйлăн тапăнса пырса йапонĕçсен Деаļрен кăнтăр-хĕвеланăçнерехри укреплени тунă позицийĕсем çине систермесĕр пырса атакăланă. Вăйлă çапăçу пулнă хыççăн йапонĕçсен 1000 çын ытла вилнĕ тата аманнă, вĕсем йĕркерен тухсах çурçĕр йеннелле чакнă. Китайĕçсен отрйачĕсем кайала чакса пыракан Йапони чаçĕсем çине тапăнса пыраççĕ.

Кăнтăр Китайра

Кантон районĕнче контрнаступлени сарăлса пыраţ, Китай çарĕсем Кантонран 10 километр çурçĕререх вырнаçнă, Саļцзйан патне çитсе тăнă.

Кантонран кăнтăр йенчи участкăра Китай çарĕсем йулашки кунсенче чылай хутчен ăнăçлă операцисем тунă. Китай çарĕсем Болона йышăннă хыççăн, Цзенчен йеннелле куçса пыраççĕ, вĕсем халăх пурăнакан пилĕк пункта йышăннă. Йулашки вăхăтри вăл участкăра пулса иртнĕ çапăçусенче йапонĕçсен икĕ пин çын ытла вилнĕ тата аманнă. Китай çарĕсем пăшалсемпе çар хатĕрĕсем нумай тытса илнĕ.

Декабĕрĕн 17-мĕшĕнче Китай авиацийĕ йапонĕçсен Цзенченри тата Шилунри позицийĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Йапонĕçсене пысăк çухатусем кунĕ.

Декабĕрĕн 18-мĕшĕнче йапонĕçсен канонерки Пакхой çине персе тăнă.(Гуандун провинцин кăнтăр-хĕвеланăç çыранĕсем). Пĕр вăхатрах йапонĕçсен икĕ самоļочĕ Пакхой çине сывлăшран бомбăсем пăрахнă, 23 çын вилнĕ.

Çурçĕр Китайра

Шаļси провинцин кăнтăр йенче Йанчен районĕнче Йапони çарĕсем, пысăк подкреплени илнипе, нумай пулмасţ сăртсем хушшинчи çулсене йышăннă. Анчах, декабĕрĕн 15-мĕшĕнче Китай чаçĕсем питĕ вăйлăн тапăнса йапонĕçсене вĕсем йышăннă позицисенчен хĕссе кăларнă. Вăл çапăçура йапонĕçсен 500 çын вилнĕ тата аманнă.

Кайа йулса килнĕ сведенисем тăрăх, декабĕрĕн 13-мĕшĕнче йапонĕçсем 1000 çынтан тăракан виçĕ колоннăпа Чжун—Йанран (Шаļси провинцин хĕвеланăç пайĕ) çурçĕр йеннерех тăракан Китай позицийĕсем çине атакăланă. Вăл атакăна китайĕçсем çĕмĕрсе тăкнă. Йапонĕçсем, 300 çын çухатнă хыççăн, çурçĕр-хĕвелтухăçнелле чакнă. Вĕсем пăшалсемпе çар хатĕрĕсем нумай пăрахса хăварнă.

Йапонин йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕн Аритăн зайавленийĕ

Декабĕрĕн 19-мĕшĕнче Йапонин йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕ йут çĕршыв корреспонденчĕсемпе тĕл пулса калаçнă Аритă йут çĕршыв корреспонденчĕсене пысăк декларацилуласа панă. Вăл декларацире: „Йапони Хĕвелтухăç Азире çĕнĕ йĕрке тăвасшăн", „Хĕвелтухăç Азире ĕçсем çĕнĕле пулса тăнă май", Китайăн економикăлă аталанăвне виççĕмĕш державăсем хутшăнасси пĕчĕкленет, тенĕ.

Çак декларацй пирки министра чылай ыйтусем панă. Тăхăр державă догăварĕ Йапони çине паллă обйазательствăсем хураţ, тесе шутлаţ-и. Йапони — тесе ыйтнине хирĕç, догăвăра официаļнă пăрахăçа кăларман пулсан та, „унăн хăшпĕр статйисем Китайра хаļхи вăхăтра пулса тăнă обстановкăна çураçулла мар", тенĕ.

Малала Аритă, ыйтусене хирĕç ответлесе: „йут çĕршыв держависен Китайри екстерриториаļнăй прависене кайарахпа пĕтермеле пулаţ, йут çĕршывсен Китайри концесçисем мĕнле пулмалли Китайри обстановкăсем малашне мĕнле пулса пынинчен килет", тенĕ. „Китайра Йапони—Манчжоу-Го—Китай блокĕ тума чарса тăракан пур чăрмавсене те петеретпĕр", — тенĕ малала Аритă.

Çакăн пек калавă хыççăн, йут çĕршыв корреспонденчĕсенчен пĕри: Йапони ахаļ те тăхăр державă догăвăрне пасрĕ ĕнтĕ, тенĕ. Вăл хăй каланине çирĕплетме догăвăран 3-мĕш статйи калакан текста илсе кăтартнă. Аритă кун пирки: „ман алăра догăвар тексчĕ çук çавăнпа та ку ыйту пирки тавлашса тăма пултараймастăп", тенĕ. (Тăхăр державă тунă догăвăран 3-мĕш статйи, догăвăр çине ала пуснă государствăсене: 1) Китайăн мĕнле те пулсан паллă районĕнче суту-илӳ йе економикă аталанăвĕ тĕлĕшĕнчен малта тăракан права илес шутпа Китайпа килĕшӳ тума; 2) догăвăр çине алă пуснă государствăсен пĕртан правине пăсас шутпа Китайра суту-илӳ йе промышлĕннăç йенĕпе монополи йе малта тăракан вырăн йышăнма тăрăшнине чараţ).

Америкăпа Англи Чан Кай-шине кивçен укçа пани çине мĕнле пăхаттăр есĕр, тесе ыйтнине хирĕç, Аритă: „Епĕ çакна асăннă державăсем Йапони тĕлĕшĕнчен политикă йенĕле тăвакан ĕç вырăнне хумастăп", тенĕ.

Кун хыççăн министра: „Йапони Портсмут догăварĕ çине те вăл тăхăр державă догăвăрĕ çине пăхакан позицирен пахаţ-и?" тесе ыйту пана. Аритă çапла ответленĕ: „Епĕ Портсмут догăварĕ çинчен асăнмарăм, анчах та тĕрлĕ догăварсен пур йышши статйисем те хаļхи обстановкăра усă курма йурăхлă пулмаççĕ". Çар ĕç министрĕн заместителĕ Тодзио Совет Сойузне хирĕç вăрçа хатĕрленесси çинчен калавине министр мĕнле шутлаţ, тесе ыйтнине хирĕç, Аритă çапла ответленĕ: „Ку ыйту пирки епĕ йут çĕршыв министрĕ пек пулса официаļнăй зайавлени тума хатĕрленместĕп".

(ТАСС).

Испанири фронтсенче

Испанин нациоļнăй оборонă министерствин официаллă сводкинче, декабĕрĕн 19-мĕшĕнче фронтсенче пуринче те лăпкă, тăни çинчен калана.

(ТАСС).

Районри хаçатсем тăрăх

◆◆ „Осоавиахим" колхоз (Йелчĕк р.) кăçал 2000 штук арбуз, гектартан 240 центнĕр купăста, 593 центнĕр сухан тата 274 центнĕр выļăх кăшманĕ туса илнĕ. Вăл çимĕçсене сутса колхоз 17 600 тенкĕ тупăш илнĕ („Колхоз йалавĕ").

◆◆ ПСК(б)П Парачкав райкомĕ кĕнекепе ĕçлеме тата конспект çырма вĕрентес ыйтупа" ПСК(б)П историйĕн Кĕске курсне" харпăрхăй тĕллĕн вĕренекен партипе комсомол активне тата совет интеллигенцине ваļļи консуļтаци туса иртернĕ. Консуļтацире 120 çын ытла пулнă. („за большевистские темпы").

◆◆ Вăрмарти машинăпа трактăр станцийĕ трактăриссен курсне организациленĕ. Унта 80 çын вĕренет. („Хĕрлĕ йалав").

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНАВ.

Шупашкарти ерех савăтне
ОПЫТЛĂ СЧЕТОВОДСЕМПЕ БУХГАЛТĔРСЕМ КИРЛĔ
Ĕçукçи килĕшӳ тăрăх тӳлеççĕ.
Диреќци.
2—2

„Росснабсбытăн"
Чăваш кантурне хăвăрт кирлĕ:
економист-плановик
тата
товаровед-учетчик
2—2

Пĕлтерни

Ыран, декабĕрĕн 23-мĕшĕнче, хула совет çуртĕнче, вырăнсенчи комсодсен Шупашкар хулинчи финанс активĕпе пĕрле канашлу пулаţ.

КУН ЙĔРКИ:

1. Перекет касси заведуйушчин доклачĕ.
2. Вырăнсенчи комсодсен отчочĕсем.

Канашлу каçхине 7 сехетре пуçланаţ.

Хулари комсод.
Хула совечĕн финанс секцийĕ.

Хисеплĕ граждăнсем!
Есĕр хăвăрăн ача сывлăхлă пултăр теттĕр пулсан,—ăна
ДЕТСКАЯ МУКА
текен çăнăх çитерĕр
Мĕнле усă курмалли çинчен кашни коробкă çинех çырса панă. Детская мука текен çăнăха Сойузпродмагăн Шупашкар хулинчи, Канашри тата вакунсем йусакан савăтри „Бакалея" магазинĕсенче йаланах сутаççĕ.

„Бакалея" магазин
ÇĔНĔ ÇУЛ ЙОЛКИ ТĔЛНЕ АЧАСЕНЕ ПОДАРКĂСЕМ ПАМА
ЗАКАЗСЕМ ЙЫШĂНАŢ
Подаркăсене йатарласа тунă тĕслĕ пĕчĕк хутаçсемпе илемлетеççĕ.
Заказсем пама васкăр.
„Бакалея" магазинăн адрĕсĕ: Хĕрлĕ плошчĕт, 3-мĕш № çурт.

„СОЙУЗКИНОПРОКАТĂН"
ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКĔНЧИ УЙРĂМĔ
Чăваш республикĕнчи екрансем çине
„БОЛОТНЫЕ СОЛДАТЫ"
йатлă саслă, художествăллă çĕнĕ фиļм кăлараţ.
Сценариссем: Йурий Олеша тата А. Мачерет
Режиссер П. Мачерет.
ТĔП РОĻСЕНЧĔ
Пауļ—артист-орденоносĕц О. ЖАКОВ. Мари—артистка С. ШИРОКĂВĂ. Тедеман—республикăн тава тивĕçлĕ артисĕ орденоносĕц И. КУДРЙАВЦĔВ. Аптекăр—республикăн тава тивĕçлĕ артисĕ орденоносĕц С. МЕЖИНСКИЙ. Бишоп—республикăн тава тивĕçлĕ артисĕ орденоносĕц В. ВАНИН. Освадьт—республикăн тава тивĕçлĕ артисĕ С. МУРАТĂВ. Веди—республикăн тава тивĕçлĕ артисĕ Б. ПЯСЕЦКИЙ.
ФАШИСĂМ—ВĂЛ ВĂРÇĂ
Германи. Çĕршывра фашисăм алхасаţ.
Пытанса, вăрттăн ĕçлекен компарти фашисăма—капиталисăмăн йунлă йыттине хирĕç çирĕппĕн кĕрешет.
Компарти паттăр кĕрешӳре кунсеренех фашисăма хирĕçле пĕрлĕклĕ халăх фронтне туптаса пыраţ, çав халăх фрончĕ фашисăма пĕтерсе хумалă. „Болотные солдаты" фиļм çав кĕрешĕве çутатса параţ.
„Мосфиļм" киностудийĕн производстви 1938 çул.

Чăваш радиокомитетăн РВ—74 станци урлă декабĕр уйăхĕн виççĕмĕш вунăкунлăхĕнче паракан паллă передачăсен

ПРОГРАММИ

(МУСКАВ ВĂХĂЧĔПЕ)

22/XII	16.00—16.28—Концерт. ССР Сойузĕнчи халăхсен йуррисем. 19.30—19.58—„ПСК(б)П Парти историн Кĕске курсĕ" (чăвашла, XII сыпăк). 21.00—21.58—Литературă передачи. Тĕне хирĕçле калавсем. 22.00—22.58—Вырăссен Даргомыжский композитăрĕн творчĕствине кăтартса памалли концерт. (Симфонический оркестр выļаţ).
23/XII	16.00—16.28—Чăваш музыкин концерчĕ. (Музыкаļнăй училишчăн вокаļнăй квартечĕ). 17.00—17.28—Ача-пăча передачи. Калаçу: Йолкă мĕнле иртермеле.
24/XII	18.45—19.30—УРКМ харпăрхăй пултарулăх коллективĕн выступленийĕ.
25/XII	17.00—16.28—Концерт. Украинă йуррисемпе ташшисем. 17.00—17.58—Ача-пăча передачи. Сервинский „Матрос и школяр" (ТЮЗ постановки). 19.00—19.58—ПСК(б)П историне вĕренекенсене пулăшмалли калаçу.
26/XII	16.00—16.28—Оборонă музыкин концерчĕ (Государствă хорĕ йурлаţ). 19.30—19.58—Доклад. ССР Сойузĕнчи граждăнсен вăтăлсан пурăнмалăх пулăшу илмелли права пур.
27/XII	16.00—16.28—Радио итлекенсен зайавкисем тăрăх концерт. 17.00—17.28—Ача-пăча передачи. Çĕнĕ çулти йолкă тĕлне сăвăсемпе йурăсем. 17.30—19.58—ПСК(б)П историне вĕренекенсене пулăшмалли калаçу
28/XII	19.30—19.58—ПСК(б)П историне вĕренекенсене пулăшмалли калаçу. 20.00—21.28—К. Иванов—„Нарспи" (Пединститут залĕнчи литературă вечĕрĕн трансļаци).
29/XII	16.00—16.28—Концерт. Чăваш йуррисем (Государствă хорĕ йурлаţ). 17.00—17.58—Ача-пăча передачи. Ишлей вăтам шкулĕн выступленийĕ — „Каникулсене хаваслăн иртерер!".
30/XII	18.45—19.30—Концерт. „Новая жизнь" колхозăн шумовой оркестăрĕн выступленийĕ.
31/XII	16.00—16.28—Çĕнĕ çул йачĕпе литературă передачи. 17.00—17.28—Калаçу: 1938 çул итогĕсем тата 1939 çулти задачăсем. 19.00—22.00—Ача-пăча передачи. Пионерсемпе октябрйатсен Тĕп çуртĕнчи çĕнĕ çул йолкине трансļацилени.

Чăвашрадиокомитет.

Уполномоченный Чувашглавлита № 589 Гор. Чебоксары, типография № 1 Местпрома ЧАССР, заказ № 881 ф. б. 58×84 п. л.